Чебоксарская
Б-ка им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ИЙУЛЬ
21
КĔҪНЕРНИКУН
166 (4979) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш ҫул тухать — *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпҫтăвкомăн хаҫачĕ* — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 1—51, Ред. заместительĕн 1—38, Редакци секретарĕн 1—40, Конторăн 1—23

Парти вĕренĕвĕнчи „ҫезонлăха“ тата формаљнăҫа тĕппипех пĕтерер

Партин пуҫламĕш организацисенчи отчотпа суйлав пухăвĕсем, районсенчи тата хуласенчи партконференцисем партилĕ-политикăлă ĕҫ малашне тата ытларах вăйлатса пырас лозунгсемпе пулса иртрĕҫ. Пуҫламĕш организацисенчи отчотпа суйлав пухăвĕсем тата районсенчи, хуласенчи партконференцисем чăваш парторганизацин пурнăҫĕнче иртнĕ ҫулсенче коммуниссене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен вĕрентесси палăрмалах ӳснине кăтартрĕҫ. Коммуниссемпе парти членĕн кандидачĕсене идейăпа политикă тĕлĕшĕнчен вĕрентсе ӳстерес йĕнĕпе чылай парторганизацисем лайăхрах ĕҫлеме тытăннă. Ҫак ĕҫре парторганизаци Сталин йулташ бољшевисăма вĕренсе алла илесси ҫинчен панă лозунга пурнăҫа кĕртессишĕн, троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандăсене тăпăлтарса пĕтерес тĕлĕшпе кĕрешни татăклă вырăнта тăнă.

ССР Сойузĕн, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем кашни коммуниса ĕҫре питĕ ответлă, питĕ тимлĕхлĕ пулма хушрĕҫ. Коммуниссем суйлавра массăсен организатăрĕсем, пропагандиссем, агитатăрсем пулчĕҫ. Вĕсем ҫак ĕҫре ӳссе ҫитĕнчĕҫ, хăйсен идейăпа политикăла пĕлӳлĕхне ӳстерчĕҫ.

Анчах та иртнĕ отчотпа суйлав пухăвĕсенче пур районсенче те парти райкомĕсен парти вĕренĕвне организацилес ĕҫри ҫитменлĕхĕсене хытă критиклерĕҫ. Мĕншĕн тесен, парти райкомĕсемпе Шупашкар хула комитечĕн тата пуҫламĕш организацисен кулленхи ĕҫĕнче пропагандă ĕҫĕ халĕ те кайа йулнă участокă пулса тăрать. Пуҫламĕш организацисенчи пухусенче, районсенчи тата хуласенчи партконференцисенче ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн ĕҫесене те хытă критиклерĕҫ.

Отчотпа суйлав пухăвĕсемпе партконференцисем пулнăран вара вăхăт нумай иртрĕ. Ҫапла пулин те пропагандă ĕҫĕнче пысăк ҫитĕнӳсемех курăнмаççĕ. Партин Шупашкар хулинчи организацинче тата ытти хăшпĕр районсенчи организацисенче ҫу вăхăтĕнче парти вĕревĕвĕ нумай кружоксем тăрăх саланса кайма тытăннă. Чылай районсенче партин районри активĕ вĕренекен кружоксенче ҫуллахи вăхăтра заӊатисем йĕркелĕ пулса иртмеççĕ, хуҫалăх ĕҫĕсемпе районсене кайнă май, час часах кружоксен заӊатийĕсем те пулмаççĕ. Партин тата советăн облăҫри активне вĕревтес ĕҫе ку тарана ҫитсе те организацилемен, актив хăй тĕллĕн вĕревет, тесе шутлаççĕ пулас.

Районсенчи тата республикри йертсе пыракан оргăнсене ҫĕнĕ ҫынсем, ҫамрăк работниксем килчĕҫ. Вĕсене хăйсен политикăпа идейăлă пĕлӳне хăпартма куллен пулăшмала. ПСК(б)П Обкомĕн бӳровĕ 1938 ҫулхи апрелĕн 9-мĕшĕнче парти вĕренĕвне лайăхлатас тĕлĕшпе конкретлă решени йышăнчĕ. Анчах ҫак решенийе чылай районсенче сӳтсе те йавман, паллах ĕнтĕ ăна пурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Ыйтасчĕ, Обком ҫак решенине мĕн тума йышăннă ха? Парти райкомĕсен, Шупашкар хула комитечĕн, ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн ҫав решени тăрăх пропагандă ĕҫне лайăхлатассишĕн бољшевикла ĕҫлемеле пулнă, анчах вĕсем ҫав решени хăй тĕллĕнех пурнăҫа кĕрессе шанса тăнă.

Вăрнар райкомĕнчи работниксем Обком бӳровĕ парти вĕренĕвĕ пирки йышăннă постановлени ҫинчен йулашки кунсене ҫитиччен пачах пĕлмен. Нимĕн тĕлĕнмели те ҫук, ҫак районта парти вĕренĕвĕн шкулĕсемпе кружокĕсене ку тарана ҫитсе те Обком бӳровĕ йышăннă решени тăрăх урăхлатса ҫĕнетмен. Йерши пуҫĕнчи пуҫламĕш парторганизацири коммуниссен вĕренĕве район центрне, 9—10 километра ҫӳремеле, ҫавăнпа вĕсем заӊатисене ҫӳреме тахҫанах пăрахнă, парти райкомĕ ку коммуниссене вĕрентессишĕн пачах тăрăшмаст.

Райкомсем нумайĕшĕсем парти вĕренĕвĕ ҫине питĕ сахал ҫаврăнса пăхаççĕ. Вĕсем 1938 ҫулти апрел уйăхĕнчен пуҫласа, хăйсен ларăвĕсенче парти вĕренĕвĕн ĕҫне организацилесси ҫинчен ик виҫĕ вак-тĕвек ыйтусене ҫеҫ сӳтсе йавнă. Кружоксене йертсе пыракансемпе вĕренекенсен доклачĕсене итлемеççĕ. Ҫакă ĕнтĕ вăл парти райкомĕсем коммуниссен политикăлă пĕлӳне ӳстерес ĕҫе ҫителĕксĕр йертсе пынине тата тепĕр хут ҫирĕплетет.

Парти вĕренĕвне организацилес тĕлĕшпе Тăвай (райком ҫекретарĕ Ваҫилйĕв), Сĕнтĕрвăрри (райком ҫекретарĕ Красиљниквăв), Йелчĕк (райком ҫекретарĕ Шакав) райкомĕсем лайăхрах ĕҫлеççĕ. Ҫав районсенчи райкомсен пĕрремĕш ҫекретарĕсем пропҫеминарсене, Ленин—Сталин произведенийĕсем тăрăх вĕренекен кружоксене хăйсем йертсе пыраççĕ, парти пропаганди ĕҫĕпе тĕплĕн ĕҫлеççĕ.

Улатăр районĕнче те парти вĕренӳ ĕҫне начар мар организациленĕ.

Парти вĕренĕвĕн тĕрлĕ формисемпе коммуниссене ҫавăрса илес ĕҫре те ҫитменлĕхсем питĕ нумай. Чăваш парторганизацинче парти членĕсемпе кандидачĕсем 4.693 ҫын пулсан, 506 ҫынна ку тарана ҫитсе те парти вĕренĕвне хутшăнтарман. Шупашкар хулинче 181 коммуниса, Ҫĕмĕрле районĕнче 52 коммуниса, Канаш районĕнче 48 коммуниса парти вĕренĕвĕн нимĕнле кружокĕсемпе шкулĕсене хутшăнтарман. Кружоксемпе шкулсене ҫӳрекенсен хисепĕ сахаллине шута илсен, вара вĕренĕве хутшăнман коммунисем тата ытларах пулать. Сăмахран, ийулĕн 10-че Шупашкарти нумай кружоксенче вĕренме ҫӳрекенсен хисепĕ 60 процент ҫеҫ пулнă. Ытти районсенчи кружоксенче те вĕренме ҫӳрекенсем кунтан ытлах мар. Ҫаксем пурте парти вĕрентĕвне начар организацилени, парти райкомĕсем тата хула комитечĕ йенчен вĕренӳ ĕҫне ҫителексĕр йертсе пыни ҫинчен, „ҫезонлăха“ пĕтерессишĕн сахал кĕрешни ҫинчен калаççĕ. ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ ийулĕн 10 мĕшĕнче тĕрĕсленĕ тăрăх Шупашкар хулинчи организацинче парти пропагандине йĕркелес ĕҫре пысăк ҫитменлĕхсем пулнине палăртнă. Шупашкарта 44 кружок организациленĕ. Парти вĕренĕвĕн кунĕнче—ийулĕн 10-мĕшĕнче 10 кружокра заӊати пулман, ку вăл пĕтĕм кружоксен хисепĕнчен 23 процент пулать. Заӊатисем вĕренекенсемпе пропагандиссем килмен пирки „пулмаççĕ.

Кружоксенче программă тăрăх йачĕшĕн, формаљнă вĕренес ĕҫе халĕ те пĕтермен-ха. Чăвашсойуз ҫумĕнче Ленинисăма вĕренекен кружокра нумай пулмаст аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисем ĕлĕкрех ҫырнă конспектсем тăрăх ҫеҫ тухса калаҫаççĕ, ыттисем нимĕн шарламасăр ларааççĕ. Вĕсем аслă шкул пĕтермен, вĕсен конспектсем ҫук, заӊатисене хатĕрленмен. Ҫапла пулин те заӊатисем пулса иртнĕ, темăна вĕреннĕ, тесе шутлаççĕ.

Парти вĕренĕвĕнчи пысăк ҫитменлĕхсенчен тепри вăл вĕренекенсем, ҫавăн пекех час-часах пропагандиссем хăйсем те заӊатисене иртерме начар хатĕрленни пулать. Ҫапла ийулĕн 10-мĕшĕнче Водосвет, Чăвашгиз, Ҫĕрĕҫ халăх комиссариачĕ ҫумĕнчи кружоксене йертсе пыракан пропагандиссем хăйсем те хатĕрленмесĕр пынă. Паллă, ҫавăн пек пропагандиссем коммуниссене вĕрентеймеççĕ, вĕсен пуҫне пăтрататççĕ ҫеҫ.

Ĕҫҫыннисен политикăлă активлăхĕ ҫĕкленни кашни коммуниса социалисăм строителствинче хăйĕн авангардлă рољне ҫĕклеме хушать. Парти райкомĕсен тата Шупашкар хула комитечĕн пысăк задачи—кашни коммуниса идейăпа политикă тĕлĕшĕнчен во питани парассине, парти, совет, хуҫалăх тата ытти ĕҫре ĕҫлекен кадрсене бољшевикла воспитани парассине татăклăнах лайăхлатасси пулать.

Кашни коммуниса кулленех бољшевисăмпа хĕҫпăшаллантармала. Тĕнчери лару-тăрува, тата совет ҫĕршывĕнчи шалти лару-тăрува тĕрĕс ăнланса, тĕрĕс пĕлсе тăмала тăвасси—ҫакă ĕнтĕ парторганизацисен чи пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать. Ҫавăнпа та парти организацисен ҫу вăхăтĕнче те парти вĕренĕвне вăйсăрлатмала мар, парти вĕренĕвĕнчи „ҫезонлăха“, вĕренӳ ĕҫĕ ҫине формаљнă пăхнине хăвăрт пĕтермеле, 1938 ҫулхи апрелĕн 9-мĕшĕнче парти вĕренӳвĕ ҫинчен ПСК(б) Парти Обкомĕн бӳровĕ йышăннă решенине бољшевикла пурнăҫласа парти вĕренӳвĕ кайа йулнине пĕтерсе, чăваш парторганизацин кĕрешӳ йултарулăхне тата ҫӳле ҫĕклер.

РСФС Республикĕн 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Ҫессийĕ

РСФС Республикĕн 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Ҫессин 1938 ҫулхи ийулĕн 19-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ ҫинчен

Информацилĕ пĕлтерӳ

Ийулĕн 19-мĕшĕнче, РСФСР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра, Кремљре, РСФС Республикĕн 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Ҫессин тăваттăмĕш ларăвĕ пулнă.

Ларăва РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ депутат А. А. Жданăв председател пулса йертсе пынă.

РСФСР Верховнăй Совечĕ кун йĕркинчи 4-мĕш пункт—РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумне суйлассине сӳтсе йавма тытăнать.

РСФСР Верховнăй Совечĕн Старейшинăсен Советĕнчен депутат **И. И. Сидăрăв** тухса калаҫса сĕнӳ парать.

РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумне суйлас ĕҫре тĕп вырăнта мĕн пулмали ҫинчен Старейшинăсен Совечĕ мĕн шухăшланисене каласа парса, депутат **И. И. Сидăрăв** Старейшинăсен Совечĕ РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумне суйлама тăратнă кандидатсен йачĕсене калать. Кашни кандидата уйрăмăн сасăласа Верховнăй Совет РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумне ҫак составпа суйлать:

РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателĕ

1. **Бадайĕв Алексей Йегорович**, Усман округĕнчен суйланă депутат, Воронеж облаçĕ.

РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиум Председателĕн Замеҫтител сем

2. **Динмухаметăв Ґалей Афзалетдинăвич**, *Кукморск округĕнчен суйланă депутат*, Тутар АССР.
3. **Ибрагимăв Рахим Кирейевич**, Мелеузовск округĕнчен суйланă депутат, Башкир АССР.
4. **Пыремпилон Доржи Пыремпилович**, Улан-Уде округĕнчен суйланă депутат, Бурйат-Монгол АССР.
5. **Магомедăв Джамалутдин Махмудăвич** Левашинск округĕнчен суйланă депутат, Дагестан АССР.
5. **Магомедăв Джамалутдин Махмудăвич** бĕрски округĕнчен суйланă депутат, Кабардино-Балкар АССР.
7. **Пӳрвейĕв Дорджи Пӳрвейевич** Елиста округĕнчен суйланă депутат, Калмык АССР.
8. **Горбачов Марк Ваҫилйĕвич**, Прионежск округĕнчен суйланă депутат, Карел АССР.
9. **Ветошкин Геннадий Ваҫилйĕвич**, Сыктывкар округĕнчен суйланă депутат, Коми АССР.
10. **Менбарийĕв Абдул Джемиљ Хайрулла**. Джанкой округĕнчен суйланă депутат, Крым АССР.
11. **Кавалерăв Тимофей Илийч**, Горно-Марийск округĕнчен суйланă депутат, Мари АССР.
12. **Чембулатăв Михаил Андрейĕвич**, Темникăвск округĕнчен суйланă депутат, Мордва АССР.
13. **Гекман Александр Иоганнесăвич**, Баљцерск округĕнчен суйланă депутат, Атăл ҫинчи Нимĕҫсен АССР.
14. **Гаглойĕв Георгий Давыдăвич**, Алагирск округĕнчен суйланă депутат, Ҫурҫĕр Осетин АССР.
15. **Ардашĕв Константин Платонăвич**, Воткинск округĕнчен суйланă депутат, Удмурт АССР.
16. **Молдайĕв Супйан Кагирăвич**, Урус-Мартанăвск округĕнчен суйланă депутат, Чечено-Ингуш АССР.
17. **Андрейĕвă Зойă Ананйĕвна**, Ҫĕрпӳ округĕнчен суйланă депутат, Чăваш АССР.
18. **Аммосăв Петр Ваҫилйĕвич**, Алдан округĕнчен суйланă депутат, Йакут АССР,

РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиум Ҫекретарĕ

19. **Козлов Георгий Ваҫилйĕвич**, Пйатигорск округĕнчен суйланă депутат, Орджоникидзе крайĕ.

РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиум Членĕсем

20. **Андрейĕв Андрей Андрейĕвич**, Новоҫибирск — Октăбĕрски округĕнчен суйланă депутат, Новоҫибирск облаçĕ.
21. **Бахмурăв Петр Ваҫилйĕвич**, Камышловск округĕнчен суйланă депутат, Чељабинск облаçĕ.
22. **Власăв Иван Алексейĕвич**, Веневск округĕнчен суйланă депутат, Тула облаçĕ.
23. **Донской Владимир Александрăвич**, Переславск округĕнчен суйланă депутат, Йарослављ облаçĕ.
24. **Йефремăв Александр Илларионăвич**, Уљйановск округĕнчен суйланă депутат, Мускав хули.
25. **Йегорăв Йакăв Георгийĕвич**, Анжеро-Судженск округĕнчен суйланă депутат, Новосибирск облаçĕ.
26. **Журављов Николай Николайĕвич**, Карсун округĕнчен суйланă депутат, Куйбышĕв облаçĕ.
27. **Игнатйĕв Анатолий Иванăвич**, Хвойнинск округĕнчен суйланă депутат, Ленинград облаçĕ.
28. **Козлов Анатолий Петрович**, Курск йал округĕнчен суйланă депутат, Курск облаçĕ.
29. **Козырьков Иван Трофимович**, Шемышейск округĕнчен суйланă депутат, Тамбăв облаçĕ.
30. **Косарĕв Александр Ваҫилйĕвич**, Дзержинский округĕнчен суйланă депутат, Горький облаçĕ.
31. **Кузнецов Николай Гераҫимович**, Приморск округĕнчен суйланă депутат, Инҫет-Хĕвелтухаҫ крайĕ.
32. **Попков Петр Ҫергейĕвич**, Московски-Ленински округĕнчен суйланă депутат, Ленинград хули.
33. **Седин Иван Корнейĕвич**, Каменск округĕнчен суйланă депутат, Тамбăв облаçĕ.
34. **Староторжский Александр Павлăвич**, Бологовск округĕнчен суйланă депутат, Калинин облаçĕ.
35. **Угарăв Александр Иванăвич**, Бауман округĕнчен суйланă депутат, Мускав хули.
36. **Хохлов Иван Ҫергейĕвич**, Мытищинск округĕнчен суйланă депутат, Мускав облаçĕ.
37. **Шахурин Алексей Иванăвич**, Галичĕск округĕнчен суйланă депутат, *Йарослављ облаçĕ*.
38. **Шкирйатăв Матвей Федăрăвич**, Тула йал округĕнчен суйланă депутат, Тула облаçĕ.
39. **Йакăвлĕв Всеволод Федăрăвич**, Серетенск округĕнчен суйланă депутат, Чита облаçĕ.

РСФСР Верховнăй Совечĕ кун йĕркинчи 5-мĕш пункта—РСФСР Правителствине—РСФСР Халăх Комиссарĕсен Советне туса хурассине пăхса тухма тытăнать.

РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ А. А. Жданăв РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Н. А. Булганин депутатăн ҫак зайавленине вуласа парать:

„РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателне—А. А. Жданăв йулташа.

РСФСР Конституцийĕн 47-мĕш статйинпе шайлăн тата РСФСР Правителствине туса хурас ыйтăва РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕррейĕш Ҫессин кун йĕркинче пăхса тухма лартнă май, РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хăйĕн обйазанăҫĕсене туса пĕтерни тесе шутлать тата хăйĕн полномочийĕсем Верховнăй Совет умĕнче пĕтнĕ, тесе йышăнать.

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сирĕнтен ҫакăн ҫинчен Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Советне пĕлтерме ыйтать.

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Н. Булганин.

1938 ҫулхи ийулĕн 19-мĕш“.

Верховнăй Совет РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн зайавленине сӳтсе йавма тытăнать.

Прениссенче тухса калаҫнă депутатсем **А. И. Угарăв** (Бауман округĕ Мускав хули), **М. Ф. Шкирйатăв** (Тула йал округĕ Тула облаçĕ), **И. М. Червов** (Боготољск округĕ, Красноярск крайĕ), **М. Е. Колцов** (Пензă йал округĕ, Тамбов облаçĕ), **А. В. Косарĕв** (Дзержинский округĕ, Горький облаçĕ) РСФС Республикĕн хăшпĕр халăх комиссариачĕсен (Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ, Ҫутĕҫ Халăх Комиссариачĕ, Вырăнти промышленнăҫ Халăх Комиссариачĕ, Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ, Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕ, Совхозсен Халăх Комиссариачĕ) ĕҫĕсене критиклеççĕ.

Депутат **И. С. Хохлов** сĕнĕвĕ тăрăх Верховнăй Совет ҫакăн пек постановлени йышăнать:

„Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Совечĕ Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Советне шанать тата Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателне **Николай Александрович Булганин** йулташа, прениссем панă чухне депутатсем критиклесе каланисене шута илсе, Правителствă составĕ ҫинчен хăйĕн сĕнĕвĕсене тăратма хушать“.

Ҫак ĕҫсене тунă хыççăн РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Ҫессин тăваттăмĕш ларăвĕ хупăнать.

РСФСР Верховнăй Совечĕн 1-мĕш Ҫессинче.
ӲКЕРЧĔК ҪИНЧЕ (сулахайран): Г. М. Маленков, И. В. Сталин, М. И. Калинин, К. Йе. Ворошилăв тата Н. И. Йежов йулташсем ҫеҫҫиpe.
Ф. Кисловпа С. Лоскутов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Вулав ҫурчĕсем—уйхире!

ИШЛЕЙ. Халĕ колхозниксем хĕрӳлĕ ĕҫе тухрĕҫ. Вулав ҫурчĕсен уйхирте колхозниксем хушшинче куљтурăлă-массăлă ĕҫе лайăх туса пыни кирлĕ. Каннă вăхăтра хаҫат-журналсем вуласа памала, ҫтена хаҫачĕсем кăлармала.

Уйрăмах колхозниксем Испани тата Китай ĕҫхалăхĕ ирĕклĕ пурнăҫшăн, йунлă фашисăма хирĕç паттăррăн кĕрешни ҫинчен лайăх пĕлсе тăрасшăн.

Тĕнчери лару-тăру ҫинчен тата партипе правителствă решенийĕсем ҫинчен массăна ăнлантарса парасси—вулав ҫурчĕсен куллен туса пымали ĕҫĕ. Ҫакна вулав ҫурт пуҫлăхĕсем нумайĕшĕсем ăнланса илеймен пулас, вĕсем халĕ колхозниксем хушшинче начар ĕҫлеççĕ-ха.

Районра лайăх ĕҫлекен вулав ҫурчĕсем пур. Чаканар, Ишек, Сыпайкасси, Вăнимĕркасси, Очăкасси йалсовечĕсенчи вулав ҫурчĕсем куљтмассăлă ĕҫе чылайах ăнăҫлă туса пыраççĕ. Вĕсем массăпа тачăн ҫыхăнса тăраççĕ.

Очăкассинчи вулав ҫурчĕ уйăхре куљтурăлă-массăлă ĕҫе туса пыма куљтповозкă организацилет. Колхозниксем ĕҫленĕ ҫĕрте, канnă вăхăтсенче хаҫатсем вулама ҫынсем уйăрнă. Шавлă оркестр организациленĕ. Вулав ҫурт пуҫлăхĕ Н Манухин йулташ ĕҫшĕн тăрăшать.

Анчах Анаткас Марка вулав ҫурчĕн пуҫлăхĕ И. Иванов, Йамайкасси вулав ҫурчĕн пуҫлăхĕ В. Иванов, Мамкари—Казаков йулташсем куљтурăлă-массăлă ĕҫе начар йĕркеленĕ. Вĕсем хăйсен ĕҫĕн ответлăхне туймаççĕ.

Мамка вулав ҫурчĕн библиотекинче пурĕ те 65 кĕнеке ҫеҫ. Йалсовет йенчен вулав ҫуртне нимĕнле пулăшу та ҫук.

Вулав ҫурчĕсем халĕ хăйсен ĕҫне уйхире, бригадăсене, звеносене куҫармала, вĕсен хĕрӳлĕн ĕҫлемелĕ.

И. Максимăв.

Комбайнсем уйра

ШĂХАСАН, ийулĕн 19-мĕшĕ. (Телефон тăрăх). Комбайнсем саккăрĕшĕ те колхозсене ҫитнĕ. Енер, ийулĕн 18-мĕшĕнче, Ентрийелре, Шикалире тата Ухман йалĕнче комбайнсем ыраш уйне ĕҫлеме тухрĕҫ. Пайан тата 4 комбайн ĕҫлеме тытăнать.

А. Сымокин.

Ыраш вырма тухрĕҫ

СĔНТĔРВĂРРИ, 19. (Хамăр корр. телефон тăрăх). Районри кăнтăр йенчи колхозсем пурте тенĕ пекех ыраш вырма тухрĕҫ.

Кутемер йалсоветне кĕрекен колхозсем пайанхипе иккĕмĕш кун ĕнтĕ пулса ҫитнĕ вырăнсене выраççĕ.

2-мĕш Чурашри „Новый быт“ колхоз ийулĕн 19-мĕшĕ тĕлне 30 гектар ыраш вырнă. Хирте ĕҫленĕ ҫĕрте столовăй, радио пур. Тырă выракансем каннă вăхăтра вулавçăсем хаҫат-журналсем вуласа параççĕ.

Тепĕр ик-виҫ кунтан районра ыраш вырас ĕҫ массăлăн пуҫланать.

Тăкаксемпе кĕрешни ҫук

ҪĔРПӲ, ийулĕн 20-мĕш. (Телефон тăрăх). Пайанхи куна районра 117 колхозран 50 колхоз ыраш вырма тухнă. Ыран пур колхозсем те вырма пуҫлаççĕ.

Йантушри „Ҫамрăк вăй“ колхоз ыраш вырма ийулĕн 16-мĕшĕнче тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕ. Уйра 4 жнейкă ĕҫлет. Жнейкăсемпе нормă тăрăх ҫменăра 6 гектар вырмала пулсан, В. Охотникăв 6,25 гектар, Ф. Йакимăв 7,2 гектар вырса пыраççĕ. Кунта жнейкăсемпе икĕ ҫменăпа ĕҫлеççĕ. Столовăй, йаслĕ, площадкă ĕҫлет. Хаҫатсене хире илсе тухса валеççĕ. Куљтработник Башмаков колхозниксем хушшинче тĕрлĕрен калаҫусем иртерет, РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Ҫессин ĕҫĕсемпе паллаштарать.

Уйрах ҫтена хаҫачĕсем кăлараççĕ. Ҫĕнĕ тырра хума амбарсем, кĕлтесем турттарма 70 урапа, 390 михĕ, 150 шăналăк хатĕрленĕ.

Районра тырă вырма начар хатĕрленсе тухнă колхозсем те пур. „Красный Волгарь“ колхозра авансем туман. Ĕҫ планĕ ҫук. Пĕр каҫалăкра 35—40 ҫын пĕрле ĕҫлеççĕ. Колхозниксем хушшинче ĕҫ дисциплини начар. Колхозниксем тырă вырма иртнине 11 сехетре ҫеҫ тухаççĕ. Пахалăх комиççи ĕҫлемест. Тăккаланчăксемпе кĕрешмеççĕ. Пĕр тăваткăл метр ҫинче 50 пĕрчĕ тăкăнса йулать. Жнейкăсем пур пулсан та вĕсемпе усă курмаççĕ. Молотилкăна йусама та пуҫăнман.

Правлени членĕсемпе бригадирсем уйра пит сахал пулаççĕ.

Калинин йачĕпе тăракан колхозра та жнейкăсемпе усă курмаççĕ. Кунта 42 михĕ ҫитмест.

В. Ваҫилйĕв.

Йалхуçалăх налогне хурас йĕркесем çинчен

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1934 çулти майăн 31-мĕшĕнче „1934 çулти йалхуçалăх налогĕн положенине çирĕплетесси çинчен" йышăннă постановлени тăрăх (С. З. СССР 1934 года, № 30, ст. 231—б; № 45, стр. 353), 1935 çулти майăн 31-мĕшĕнче „1935 çулти йалхуçалăх налогĕ çинчен" (С. З. СССР 1935 года, № 30, ст. 232 и 237), 1936 çулти ийулĕн 20-мĕшĕнче „Йалхуçалăх налогĕн положенине малала та вăйра хăварасси çинчен" йышăннă 68-1313-ш № -лĕ (С. З. СССР № 40, ст. 340), 1937 çулти августăн 7-мĕшĕнче йышăннă 104-1418-мĕш № лĕ постановленисем тăрăх тата РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти ийунĕн 23 мĕшĕнче „Йалхуçалăх налогне хурас йĕркесем çинчен" йышăннă 201-мĕш №-лĕ постановлени тăрăх, Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнаççĕ:

I. Колхозниксен хуçалăхĕсен пĕрлешĕнмен пайĕн дохочĕсем çине налог хурасси

1. Пĕрлештермен йалхуçалăхĕнчен доход илекен колхозниксен хуçалăхĕсене валли районсем тăрăх йалхуçалăх налогĕн çак вăтам ставкисене туса парас:

Районсем	Ставкă тенкĕпе
Улатăр	36
Елĕк	33
Патăрйел	33
Вăрнар	36
Йепреç	30
Ишлей	33
Канаш	33
Куславкка	30
Хĕрлĕ Чутай	33
Кувакинă	33
Сĕнтĕрвăрри	30
Пăрачкав	36
Турхан	30
Тутаркас	33
Трак	33
Вăрмар	33
Çĕрпӳ	33
Шупашкар	33
Шăмăршă	33
Шăхасан	33
Шăнкăртам	30
Çĕмĕрле	33
Йетĕрне	36
Йелчĕк	33
Тăвай	33

Районри ĕçтăвакан комитетсем çак ставкăсен виçинче уйрăм йалсене валли, кирлĕ чухне уйрăм колхозсене валли те налог ставкисене туса параççĕ.

Колхозра колхозниксен уйрăм хуçалăхĕсене валли тĕрлĕрен ставкăсем туса пама йурамаст.

Асăрхаттарни. Колхозниксем çине 1938 çулта налог хумали ставкăсем иртнĕ çулхи виçепех йулаççĕ.

2. Пĕрлештермен йалхуçалăхĕнчен доход илнисĕр пуçне, кооперацилемен кустар-ремесла промыслисенчен йаланах доход илсе тăракан колхозниксен хуçалăхĕсем çине налог хумали ставкă (çак постановленин 1-мĕш пунктĕнче кăтартса пани) пур районсенче те 50 процент пысăкрах пулать.

Кустар-ремесла промыслипе теплĕ сайра хутра çеç ĕçлеççĕ пулсан, промысларан илекен доход пит сахал пулсан, колхозниксен çавăн пек хуçалăхĕсене валли налог ставки ӳсмест.

3. Промыслалă тата кооперацилĕ ертелсен членĕсен хуçалăхĕсене:

а) промыслалă кооперативлă ертелĕн членĕн колхоз уставĕ тăрăх пĕрлештермели йалхуçалăхĕ çук пулсан тата

б) çав хуçалăхри ĕçлеме пултаракан членсем пурте, килте ĕçлекен хĕрарăмсăр тата вĕренекенсемсĕр пуçне, промысла ертелĕнче йе колхозра члена тăраççĕ пулсан,

йалхуçалăх налогне пĕрлештермен хуçалăхран доход илекен колхозниксен хуçалăхĕсемпе пĕр танах тӳлеттереççĕ.

4. Йединоличниксен ĕçлĕхлĕ хуçалăхĕсем çине, вĕсем хăйсен йалĕн йалхуçалăх налогне тӳлемели пĕрремĕш срукчен колхоза кĕрсен, йалхуçалăх налогне колхозниксем çине хунă чухлĕ хураççĕ.

Çак çулталăк хушшинче колхозран тухнă хуçалăхсем çине йалхуçалăх налогне, вĕсен колхозран тухнă вăхăтра пулнă дохочĕсене кура, йединоличниксен хуçалăхĕсем çине хунă пек хураççĕ.

5. Ĕçукçинчен йалхуçалăх налогне илмеççĕ, унран ĕçленĕ вырăнта доход тăрăх илекен налога илеççĕ.

Рабочисемпе служăшчисен—колхоз членĕсен хуçалăхĕсем çине, вĕсен тĕп работникĕ налог хумали доходсене шута илнĕ вăхăта кĕрĕшсе йалан ĕçленĕ çĕрте çулталăкран кайа мар ĕçлет пулсан, çав хуçалăхри ĕçлеме пултаракан ытти членсем те, вĕренекенсемсĕр тата кил хуçалăхĕнче ĕçлекенсемсĕр пуçне, кĕрĕшсе ĕçлеççĕ пулсан—йалхуçалăх налогне хумаççĕ.

II. Йединоличниксен ĕçлĕхлĕ хуçалăхĕсем çине налог хурасси

6. Йединоличниксен ĕçлĕхлĕ хуçалăхĕсене валли районсем тăрăх кашни гектар çĕртен тенкĕпе çакăн пек доход нормисене туса парас:

Районсем	Пучахлă тырăсем, йĕтĕм-кукăрвĕш, выльăхсене çитерме тымар-çимĕçсем, курăксем акни	Çĕрулми лартни
Улатăр	64	185
Елĕк	64	170
Патăрйел	64	185
Вăрнар	64	170
Йепреç	68	170
Ишлей	64	170
Канаш	64	185
Куславкка	60	170
Хĕрлĕ Чутай	68	185
Кувакинă	64	170
Сĕнтĕрвăрри	69	170
Пăрачкав	64	185
Тутаркас	68	185
Турхан	68	155
Трак	64	170
Вăрмар	64	185
Çĕрпӳ	64	170
Шупашкар	60	170
Шăмăршă	60	155
Шăхасан	64	170
Шăнкăртам	60	155
Çĕмĕрле	64	170
Йетĕрне	68	170
Тăвай	64	170
Йелчĕк	64	155

Пур районсене валли те доходсен пĕр пек нормисене тăвас:

а) гектар çĕртен доход:

пахчасем	550 тенкĕ
табак тата махоркă акни	340 —„—
сатсем тата çырла пахчисем	600 „—
кантăр акни	250 —„—
хăмла вырăнĕ	340 —„—
çаран: шыв илекенни	35 —„—
шыв илменни	18 —„—

б) кашни пуç выльăх чĕрлĕхрен доход:

лаша—виç çултинчен пуçласа	110 тенкĕ
ĕне—пирвай пăрулавă хыççăн тата 3 çултан иртнĕ тынасем	90 —„—
3 çултан иртнĕ вăкăрсем	45 —„—
ăвĕл несçнă сурăхсем тата	

в) пĕр вĕлле пыл хуртĕнчен доход:

рамăлă вĕлле	7 тенкĕ
каска вĕлле	5 тенкĕ

7. Районра культурăсен тухăçĕ малăрмалăх ăрасна пулсан, районсенчи ĕçтăвакан комитетсем уйрăм йалсоветсене валли тата уйрăм йалсене валли доходсен расна нормисене туса параççĕ.

Асăрхаттарни. Йединоличниксен ĕçлĕхлĕ хуçалăхĕсен доход нормисем 1938 çулта та иртнĕ çулти виçепех пулаççĕ.

8. Йединоличниксен хуçалăхĕсен уй-хир ĕçĕнчен, çарансенчен, пахчасенчен, виноград пухса илнинчен, сатсенчен тата табак акса тунинчен килекен налог хумали доходсене çапла шутлаççĕ:

а) кĕрхи тата çурхи культурăсене акнă пĕтĕм çĕртен, анчах государствăн ака планĕнче кăçалхи çул акма кăтартса панинчен сахал мар;

б) утă çулмали тата нумай çуллăха лартнă (сатсем т. ыт. те) пĕтĕм лаптăкран.

9. Йединоличниксен ĕçлĕхлĕ хуçалăхĕсем кооперацилемен промысларан илекен çĕрĕçĕнчен мар доходсене начог хумали доходсен хисепне кĕртмеле,—пĕтĕм доходран производствăлă тĕп расхутсене налог хумали доходсен хисепне районсем тăрăх çакăн чухлĕшер кĕртмеле мар:

а) чăпта çапса,-çăпата туса, тĕрлесе тата художествăлă йапаласем, пăхса вĕренмелисем туса, вигмели турпас хатĕрлесе, çавăн пекех тата кăмпа, ирĕкре ӳсекен çимĕçсемпе çырласем пуçтарса, сухăр йе б ресклет йухтарса, утильсырйо йе кив тимĕрсем пуçтарса илнĕ доходран 50 процент;

б) çамран йăвалаcа йапаласем туса, çĕвĕ çĕлесе, стольар ĕçĕпе, турттарса, платник ĕçĕпе тата кăмака туса илнĕ доходран 80 процент;

в) ытти промысласем тăрăх—75 процент.

Вăрман хатĕрлев ĕçĕнче (вăрман касса хатĕрлесси, йăвăç турттарасси, йăвăç йухтарасси т. ыт. те) тата торф хатĕрленĕ çĕрте ĕçлесе илнĕ доходран 20 процентне пур çĕрте те налог хумали доход хисепне кĕртеççĕ.

10. Йалхуçалăх продукцисене рынăкра сутса илнĕ доходсене налог хумали доходсен хисепне хуçалăхра хисепе илнĕ суммăран районсем тăрăх çакăн чухлĕшер кĕртмеле:

а) Улатăр, Вăрнар, Йепреç, Канаш, Шупашкар, Шăхасан, Çĕмĕрле, Йетĕрне районĕсенче 60 процент, ытти районсенче 50 процент

Райĕçтăвкомсем, йалхуçалăх налог Положенин 61-мĕш статйинче кăтартса панă виçелĕ процентсенчен иртмесĕр (50 процентран сахал мар, 75 процентран ытла мар), уйрăм йалсоветсене валли тĕрлĕ процентсем кăтартса пама пултараççĕ.

11. Хула çĕрĕ çинче йалхуçалăх ĕçне тăвакан çынсем, Шупашкар хулисĕр пуçне, хăйсен дохочĕсенчен йалхуçалăх налогĕ тӳлеççĕ, Шупашкар хулинче—доход тăрăх илекен налог тӳлеççĕ.

12. Йединоличниксен хуçалăхĕсем çине хуракан налог пур чухне те çав вырăнти колхозниксен налог ставкинчен 25 процентран кайа мар пысăкрах пулмала.

13. Кутăнланса хăйсене панă ака планне тултарман тата обйазательнă йĕркепе государствăна йалхуçалăх продукцисене тăратмалине тултарман хуçалăхсем çине йалхуçалăх налогне ытти хуçалăхсем çине хунă пекех хураççĕ, анчах налог суммине икĕ хут ӳстереççĕ. Çав хуçалăхсем йалхуçалăх налогĕ йенĕпе нимĕнле льготăсемпе те усă курмаççĕ, çав шутрах вĕсене çемйери ĕçлеймен çынсен тӳпине те скидкă памаççĕ.

14. Ĕçлемесĕр (илсе сутса, çынна тара тытса ĕçлеттерсе) доход илекен йединоличниксен хресчен хуçалăхĕсем çине, вăл хисепрех кулаксен хуçалăхĕсем çине, йалхуçалăх налогне йединоличниксен ĕçлĕхлĕ хуçалăхĕсем çине хумали ставкăсемпех, анчах доход нормисем тăрăх мар, пĕтĕм доходне хисепе илсе хураççĕ. Çав хуçалăхсен спискине тата вăл хуçалăхсен кашнин мĕн чухлĕ налог тӳлемелине районри ĕçтăвакан комитет президиумĕ çирĕплетет.

III. Налог тӳлемели сруксем

15. Пур районсенче те колхозниксен тата йединоличниксен ĕçлĕхлĕ хуçалăхĕсен йалхуçалăх налогне тӳлемели çак сруксене тăвас:

I срук: 1938 çулти çентаберĕн 1-мĕшĕ—20 процент; II срук: 1938 çулти октаберĕн 1-мĕшĕ—20 процент; III срук: 1938 çулти нойаберĕн 15 мĕшĕ—35 процент; IV срук: 1938 çулти декаберĕн 15-мĕшĕ—25 процент.

IV. Льготăсем парасси çинчен

16. Колхозниксене памали льготăсем:

а) выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕксем, хурт-хăмăр ĕрчетессине хавхалантарма колхозниксене выльăх-чĕрлĕхсемшĕн, кайăк-кĕшĕкшĕн, кроликсемшĕн тата пыл хурчĕсемшĕн налог хурассинчен пĕтĕмпех хăтараççĕ;

б) йединоличниксем йалхуçалăх продукцисене рынăкра сутса илнĕ доход çине хуракан налога, колхоз суту-илӳне сарса пырассине хавхалантарма, колхозниксем çине хумаççĕ;

в) колхозниксен хуçалăхĕсене вĕсен составĕнче çакăн пек çынсем пур пулсан йалхуçалăх налогĕнчен пĕтĕмпех хăтараççĕ:

1) Совет Сойузĕн Геройĕсем, ССР Сойузĕн орденĕсене йе революцилĕ хисеплĕ хĕçпăшал илнисем, тата ĕç геройĕсем;

2) вăрçă тата ĕç инваличĕсем—пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш групăри инвалидсен хисепне кĕртнисем;

3) йала социалисăмлă урăхлатассишĕн тата общĕствă пурлăхне сыхлассишĕн кĕрешӳре кулаксен аллинчен сăтăр курнă йалти активиссен çемйисене;

4) государствă пурлăхне сыхласа хăйсен служби ĕçне тунă çĕрте йе службăпа çыхăнса тăракан çĕрте вĕлернĕ вăрман работникĕсен çемйисене:

г) районсенчи ĕçтăвакан комитетсем, районри финанс пайĕсем тăратнипе, уйрăм колхозниксен хуçалăхĕсене (сăмахран, тип-шар курнисене т. ыт. те) йалхуçалăх налогĕнчен пĕтĕмпех йе пĕр пайĕнчен хăтарма пултараççĕ;

д) вĕсен составĕнче ĕçлеме пултаракансем 2 çынран ытла мар пулсан, çемйери ĕçлеме пултарайман членсемшĕн шутласа хунă налогран çакăн чухлĕ скидкă параççĕ: ĕçлеме пултарайманнисем 3 çын пулсан налог пысăккăшĕ 20 процент чакать, ĕçлеме пултарайманнисем 4 çын тата ытларах пулсан—30 процент чакать.

Хуçалăхăн скидкă илме права пуррине палăртнă чухне ĕçлеме пултарайманнисем тесе шутлаççĕ:

1) 60 çулти тата ватăрах колхозниксене, 55 çулти тата ватăрах колхозницăсене; 16 çултан кĕçĕн ачасене;

2) уй ĕçне тата ытти ĕçсене хутшăнма пултарайман чăлахсене;

3) вăрçă тата ĕç инваличĕсене—социаллă обеспечени йе социаллă страховани органĕсем инвалидсен 1-мĕш тата 2-мĕш группине кĕртнисене;

з) вĕсен составĕнче çар службинче тăракансем йе çар запасĕнче тăракансем—сруклăха вĕрентме йе сбора чĕннисем пулсан, налогăн çав вĕрентнĕ йе сбор вăхăтĕнче тӳлемеле килекен пайне тӳлессине тавăрăннă кунран пĕр уйăха малала тăсса параççĕ;

и) ватă пирки ĕçлеймен (утмăл çулта тата ватăрах) колхозниксен хуçалăхĕсене, çемйере ĕçлеме пултаракансем çуккисене, налогран пĕтĕмпех хăтараççĕ;

к) куçса ларнă колхозсен членĕсен хуçалăхĕсене, план тăрăх куçса ларнисене, йалхуçалăх налогĕнчен куçса ларнă вăхăтран 2 çуллăха хăтараççĕ. (ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти нойаберĕн 17-мĕшĕнче йышăннă 115/2043 мĕш №-лĕ постановлени);

л) вăрман хатĕрлес ĕçре çулталăкран кайа мар ĕçлеме контрактациленнĕ йе çав ĕçе çирĕпленнĕ çынсен хуçалăхĕсене налог тӳлесрен хăтараççĕ.

Вĕсем хăйсем çине илнĕ обйазательствăсене пурнăçа кĕртмесен, вĕсенчен налог ытти чухнехи йĕркепех шыраса илеççĕ.

17. Йединоличниксен ĕçлĕхлĕ хуçалăхĕсене паракан льготăсем:

а) ватă пирки ĕçлеймен (утмăл çулта тата ватăрах) йединоличниксен хуçалăхĕсене, çемйере ĕçлеме пултаракансем çуккисене, налогран пĕтĕмпех хăтараççĕ.

Йединоличниксен ĕçлĕхлĕ хуçалăхĕсене, çемйере ĕçлеме пултаракан членсем çуккисене, çав вăхăтрах хуçалăхăн шултра выльăхсем çук пулсан, вăйсăр тесе, районри ĕçтăвакан комитетсем, районри финанс пайĕсем тăратнипе, налогран пĕтĕмпех йе пĕр пайĕнчен хăтарма пултараççĕ;

б) хушма-хуçалăх пур, анчах колхозра тăман рабочисемпе служăшчисем тĕлĕшпе, вĕсен хушма-хуçалăхĕ йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх çав районри колхозниксен пулма пултаракан хушма-хуçалăхран пысăк мар пулсан, çак постановленин 5 мĕш статйи вăйра пулать.

Рабочисемпе служăшчисен çак статйара каланă условисем пĕтĕмпех тĕл килекен хуçалăхĕсем çине, вăл хуçалăхсен тĕп работникĕ кĕрĕшсе ĕçленĕ çĕрте çулталăкран сахал пурăнат пулсан, йалхуçалăх налогне колхозниксен хуçалăхĕсене валли çирĕплетнĕ ставкăсем тăрăх хураççĕ.

Çак статйа тăрăх йалхуçалăх налогне хуман рабочисемпе служăшчисем çине çурт-йĕр налогне тата çĕр рентине йăланхи йĕркепех хураççĕ.

Вĕсен составĕнче ĕçлеме пултаракансем 2 çынран ытла мар хуçалăхсене, çемйери ĕçлеме пултарайман членсемшĕн, шутласа хунă налогран çакăн чухлĕ скидкă параççĕ: ĕçлеме пултарайманнисем 3 çын пулсан—налог пысăккăшĕ 10 процент чакать, ĕçлеме пултарайманнисем 4 çын тата ытларах пулсан—20 процент чакать.

Хуçалăхăн скидкă илме права пуррине палăртнă чухне ĕçлеме пултарайманнисем тесе шутлаççĕ:

1) утмăл çулти тата ватăрах йединоличниксене, 55 çулти тата ватăрах йединоличницăсене; 16 çултан кĕçĕн ачасене;

2) уй ĕçне тата ытти ĕçсене хутшăнма пултарайман чăлахсене;

3) вăрçă тата ĕç инваличĕсене—социаллă обеспечени йе социаллă страховани органĕсем инвалидсен 1-мĕш тата 2-мĕш группине кĕртнисене;

г) вĕсен составĕнче çакăн пек çынсем пуррисене льгота параççĕ:

1) Совет Сойузĕн Геройĕсем, ССР Сойузĕн орденĕсене йе революцилĕ хисеплĕ хĕçпăшал илнисем тата ĕç геройĕсем;

2) вăрçă тата ĕç инваличĕсем—пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш группăри инвалидсен хисепне кĕртнисем;

асăннă хуçалăхсене, хуçалăхра ĕçлеме пултаракан арçынсем урăх та пулсан—шутласа хунă налогран 20 тенкĕ скидкă, хуçалăхра ĕçлеме пултаракан арçынсем урăх çук пулсан—30 тенкĕ скидкă параççĕ.

Çак статйара каланă категорилĕ çынсем хуçалăхра темиçе пулсан, льготăна çавăн пек кашни çыншăн параççĕ:

д) вĕсен составĕнче çар службинче тăракансем йе çар запасĕнче тăракансем—сруклăха вĕрентме йе сбора чĕннисем пулсан, налогăн çав вĕрентнĕ йе сбор вăхăтĕнче тӳлемеле килекен пайне тӳлессине тавăрăннă кунран пĕр уйăха малала тăсса параççĕ;

е) тип-шар курнă хуçалăхсене хуçалăх тӳснĕ инкек мĕн чухлĕ пулнине тата хуçалăхăн тĕреклĕхне кура районри ĕçтăвакан комитетсем йалхуçалăх налогĕнчен пĕтĕмпех йе пайĕнчен хăтараççĕ.

ж) йала социалисăмлă урăхлатассишĕн тата общĕствă пурлăхне сыхлас кĕрешӳре кулаксен аллинчен сăтăр курнă йалти активиссен çемйисене налогран пĕтĕмпех хăтараççĕ;

з) государствă пурлăхне сыхласа хăйсен ĕçне тунă чухне йе хăйсен ĕçĕпе çыхăнса тăракан ĕçе тунă çĕрте вĕлернĕ вăрман работникĕсен çемйисене налогран пĕтĕмпех хăтараççĕ;

и) кăмрăк промышленнăçĕнче çĕр айĕнче ĕçлеме çулталăкран сахал мар сруклăха контрактациленнĕ йе çирĕпленнĕ çынсен хуçалăхĕсене налогран хăтараççĕ.

Вĕсем хăйсен обйазательствисене пурнăçа кĕртмесен, вĕсенчен налог йăланхи йĕркепех шыраса илеççĕ;

к) чукун çулсем, шыв çулĕсем, шоççе тата грунтовой çулсем çинчи линейнăй работниксен транспăрта панă çĕр çинчи пур тĕрлĕ йалхуçалăхĕнчен илнĕ дохочĕсем çине те налог хумаççĕ;

л) план тăрăх куçса ларнисен хуçалăхĕсем ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти нойаберĕн 17-мĕшĕнче „Йалхуçалăх переселенине памала льготăсем çинчен" йышăннă 115/2043 №-лĕ постановлени тăрăх льготăсемпе усă кураççĕ.

18. Районсенчи ĕçтăвакан комитетсемпе йалсоветсене халăха йалхуçалăх налогĕн саккунне ăнлантарса пама, хуçалăхсене тата доходсене пĕтĕмпех те тĕрĕс шута илмеле тума, йалхуçалăх налогне тĕрĕс тата вăхăтра шутласа хума, саккун тăрăх паракан льготăсене пама тата налог тӳлевĕсем вăхăтра пухăнмала тума хушас.

19. Çак постановленине кăларнă май, Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1936 çулти ийулĕн 29-мĕшĕнче тата 1936 çулти августăн 25-мĕшĕнче „1936 çулти йалхуçалăх налогне хурас йĕркесем çинчен" йышăннă постановленисем, 1937 çулти августăн 20-мĕшĕнче тата 1937 çулти нойаберĕн 21-мĕшĕнче „Йалхуçалăх налогне хурасси çинчен" йышăннă постановленисем вăйран тухаççĕ.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ заместителĕ **А. Краснов.**

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ заместителĕ **Ф. Матвейĕв.**

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ **Т. Васильĕв.**

Шупашкар хули,
1938 çул, ийулĕн 14-мĕшĕ.

Пысăк хаваспа, тулли кăмăлпа

КАНАШ. Районри ĕççыннисем ийулĕн 16-мĕш тĕлне Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Зайомне 1 мĕлйун та 127 пин тенкĕлĕх çырăннă. 1937 çулта оборонă зайомне çак вăхăт тĕлне 1 мĕлйун та 71 пин те 555 тенкĕлĕх сарнă пулнă. Кăçал рабочисемпе служăшчисем çĕнĕ зайома иртнĕ çулхи зайомран 20 процент иртерсе çырăннă.

Çĕнĕ зайома сарас ĕçре районри чылай йалсоветсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Сăмахран, Сиккасси йалсовечĕ çĕнĕ зайома 11.520 тенкĕлĕх, Карăклă—4670 тенкĕлĕх, Йанкăлч—7720 тенкĕлĕх, Шаккăл 6600 тенкĕлĕх, Йаманкасси 5.375 тенкĕлĕх сарнă.

Çак йалсоветсем çĕнĕ зайома сарас ĕçре социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса ĕçленĕ. Ку йалсоветсем зайом çыранас ĕçе пур ĕççыннисене те хутшăнтарнă.

Йанкăлч йалсоветĕнчи И. Йалагин, И. Ильйин, Т. Ильйин йулташсем çĕнĕ зайома 50-шар тенкĕлĕх çыранчĕç. Çавăн пекех Сиккассинчи колхозниксенчен Воронцов, Петров, Йакăвлĕвă, Алексейĕв, Афанасйĕв йулташсем кашниĕх 50-шар тенкĕлĕх çырăнчĕç. Ку йалсоветра зайом сарас ĕçре зайом уполномоченнăйĕсем Алексейĕв, Владимирăв тата Бельайĕв йулташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Зайом уполномоченнăйĕ Никитинă йулташ Канаш хулинчи кил... [illegible] 480 тенкĕлĕх сарнă. Çавăн пекех зайом уполномоченнăйĕсем Йумансарти Плеханăв йулташ 415 тенкĕлĕх, Гладков йулташ 350 тенкĕлĕх, Тихăнăв йулташ 375 тенкĕлĕх, Карăклăри Павлăв йулташ 845 тенкĕлĕх сарнă.

Зайома пурте пысăк кăмăлпа çыраççĕ. Инвалидсен ертелĕнче ĕçлекен рабочисем пурте тенĕ пекех пĕр уйăх ĕçукçилĕх çыранчĕç. Уйрăмăнах стахановец Йакăвлĕв йулташпа стахановкă Михайлăвă йулташа палăртмала. Вĕсем пĕри 350, тепри 250 тенкĕлĕх çыранчĕç.

Анчах хăшпĕр йалсоветсемпе колхозсем çĕнĕ зайома сарассипе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ-ха. Уйрăмăнах Кӳлĕ Хĕрринчи Буденнăй йачĕпе тăракан колхоз, Вăтапуçĕнчи „Идея Ленина", Аччари „Хĕрлĕ Çар" колхозсене палăртмала.

Зайома вăхăтра вырнаçтарса пĕтерессишĕн йалсоветсен, зайом уполномоченнăйĕсен, колхоз правленисен çине тăрсах ĕçлемеле. Ку ĕçре партипе комсомол, проф ойуз организацисен, вулав çурчĕсен тивĕçлипе пулăшмала.

Зайом илме çыраннипе пĕрлех, зайом укçи пухассине те вирлĕн тытăнмала. Анчах ку ĕç районра йанăх пырать-ха. Ийулĕн 15-мĕшне çĕнĕ зайомшăн 857 тенкĕ те 75 пус çеç укçа пухнă.

Зайом укçине пухас ĕçпе перекет кассинче ĕçлекенсем те кирлĕ пек ĕçлени çук.

Павел Ленский.

Вĕренӳ çулне хатĕрленмеççĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр.) Халĕ уйăхирсенче тырпулсене пухса кĕрес ĕç мĕнле хĕрӳлĕн пырать, çавăн пекех çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕç те пысăк хăвăртлăхпа пулса пымала. Анчах Вăрнар районĕнче ку йенĕпе нимĕнле хăвăртлăх та сисĕнмест. Районра пурĕ 50 шкул, вĕсенчен çĕнĕ вĕренӳ çулне пĕри те хатĕрленсе çитмен.

Вăрнарти вăтам шкулăн çийĕ кивелнипе шыв анакан пулнă. Сакна куратăркачах „сметăпа укçа-тенкĕ пăхман" тесе çурт çине йусамаççĕ. Кĕçĕн Йавăшри вăтам шкулта çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе классене шпалер çапса, кăмакасем шуратнисĕр пуçне, урăх ним те туман. Вутă пĕр кубла метр та турттарман. Вĕренекенсемпе учителсем валли общежитипе хватерсем хатĕрлемен. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче те вĕренекенсем учебниксем çителĕксĕррипе аптăранăччĕ, кăçал та вырăс, чăваш тата нимĕç чĕлхисемпе учебниксем çук, физикăпа-хими приборĕсем çитмеççĕ. Вырăс чĕлхипе вĕрентекенсем 2 преподавателĕ кирлĕ пулсан, пайанхи куна пĕри çеç пур. Шкул хуçалăхне викам та тирпейлесе усракан çук, шкул картисем ишĕлсе тăраççĕ, пахчана выльăхсем кĕрсе сийенлеççĕ.

Çакăн пекех Кольцовкăри вăтам шкулта та çĕнĕ вĕренӳ çулне вăраххăн хатĕрленеççĕ. Шкул валли вутă турттарман. Учителсем вырăнта мар, вĕсем çитмеççĕ.

Кăшавăшри туллимар вăтам шкулта 30 партă тата класри доска пĕрре çитмест.

Çĕрпӳйелĕнчи туллимар вăтам шкулта (директăрĕ Шлӳпкин) 50 партă çитмест, вĕсене илмен. Шкул çурчĕн çийне сăрлама краскă илсе хатĕрленĕ, çу çук тесе сăрламасăр вăхăта ирттереççĕ.

Йĕршепуçĕнчи пуçламĕш шкулăн (пуçлăхĕ Чуманов) вĕренекенсем валли пĕр клас çитмест, шкулăн стандартлă партăсем çук.

Айкăш йалĕнчи пуçламĕш шкул çурчĕ кивелсе йăтăнса анас патнех çитнĕ, кăмакасем начар, кантăксем ванчăк. Шкула йалсовечĕ пулăшмасть. Шкул пуçлăхĕ Леонтйĕв йулташ та шкул çуртне йусас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

Районра шкул строительствине васкатмаççĕ. Партасри туллимар вăтам шкулта 3 клас валли, Хирпуçĕнчи туллимар вăтам шкулта пĕр клас валли пӳлĕмсем май уйăхĕнчех тума тытăннă. Анчах госбанкра „кредит çук" тесе, шкулсене укçа памасăр, тума тытăннă ĕçсенех чарса лартнă.

Çавнашкалах районра учителсене ĕç укçи парасси те йĕркелĕ пулса пымасть. Пинер шкулĕнчи учителĕ Смирнов ĕç укçи илес тесе районна 8 хут пынă.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн ку район çине тимлĕнрех çаврăнса пăхмала.

В. Васильйĕв.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти вĕренĕвĕн пĕр кунĕ Шупашкарта мĕнле иртни çинчен

(ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн материалĕсем тăрăх)

ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕ ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕпе пĕрле парти вĕренĕвĕ кружокĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тухрĕ. Хулара пĕтĕмпе 44 кружок ĕçлет. Ийулĕн 10-мĕшĕнче 9 (Чăвашсойузри, Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи, Чăвашгизри, Водосветри, Чебторгри т. ыт. те) кружок ĕçĕсене тĕрĕсленĕ. Асăннă кружоксенчен виççĕшĕнче, пĕтĕм хулипе илсен 10 кружокра, зањатисем пулса иртмен. Кунашкал вĕренни питĕ те çителĕксĕр, вăл вĕренӳ программине пурнăçа кĕртессине хăрушлăх умне кăларса тăратать.

Чебторгри парти вĕренĕвĕ кружокĕнче ПСК(б)П членĕсем 5 çын, ПСК(б)П кандидачĕсем 5 çын тата партире тăманнисем 1 çын вĕренеççĕ, вĕсенчен зањатине партире тăман пĕр йулташ кăна пынă, çавăнпа та ийулĕн 10-мĕшĕнче зањати пулмарĕ. Ку кружокра икĕ уйăх хушши ĕнтĕ вĕренмеççĕ. Май уйăхĕччен пропагандисра Шестеркин йулташ ĕçленĕ, халĕ вăл çулахи каникула кайнă, кружока йертсе пыма Братчиков йулташа хушнă, Братчиков йулташ пĕр зањати те туса иртермен. Кружокра вĕренекенсен пĕлĕвĕ пĕр пек мар, çавна пула вĕсем кăмăлсăр (Калмыковă т. ыт. те) вĕренекенсем зањатине хатĕрленсе пымаççĕ, йулашки зањатире мĕнле тема тăрăх вĕреннине тата çитес темă мĕнлине пĕлмеççĕ, зањатисем сӳрĕккĕн, идейă тĕлĕшĕнчен йапăх пулса иртеççĕ.

Парти вĕренĕвĕ Чăвашгизри кружоксенче те çавăн пекех. Кунта 3 кружок: ПСК(б) Парти историне, Ленинисăма тата ССРС историне вĕренмели кружоксем. Вĕсенчен ийулĕн 10 мĕшĕнче ПСК(б) Парти историне вĕренмели кружокра кăна зањати пулса иртнĕ. Кружока йертсе пыракан пропагандис Ваçилйĕв йулташ (Чăвашгиз директăрĕ) зањатине иртерме пыман, зањатине вĕренекен Ваçаков йулташ иртернĕ. Зањатире темăна вĕренес вырăнне (вĕсен 4-мĕш темăна вĕренмеле) Йарославский çырнă учебнике вуланă. Ытти кружоксенче зањатисем пулса иртмен. ССРС историне вĕренмели кружокра (йертсе пыракан Ивлĕв йулташ) пропагандис пыман пирки зањати пулса иртмен. Ку кружок 3 темă вĕреннĕ хыççăн, ĕçлеме те пăрахнă. Ивлĕв йулташа урăх ĕçе куçарнăранпа вара, ăна пропагандис ĕçĕнчен хăтарнипе хăтарманни паллă мар.

Кружокра вĕренекенсем зањатисене питĕ те çителĕксĕр çӳреççĕ. Хула совечĕ, Чăвашсойуз, ЧАССР Йуçтици Халăх Комиссариачĕ, Водосвет, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата Чăвашторг çумĕнчи парти вĕренĕвĕн кружокĕсене 85 çын çӳремеле, вĕсенчен ийулĕн 10-мĕшĕнче зањатине 51 çын, тепĕр тĕрлĕ каласан, 60 проц. кăна пынă.

Зањатисем идейă тĕлĕшĕнчен начар пулса иртеççĕ. Акă, Ленинисăма вĕренмели Чăвашсойуз çумĕнчи кружока илсе пăхар-ха. Унта зањатисене теори тĕлĕшĕнчен нумай хатĕрленнĕ çынсем „турттарса“ пыраççĕ (Иванов, Петрова—вĕсем нумайăх пулмасть аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă) Анчах вĕсем те зањатисене первоисточниксем тăрăх хатĕрленсе пымаççĕ, аслă шкулсенче вĕреннĕ чух çырнă конспектсемпе усă кураççĕ. Ытти вĕренекенсем пропагандис чĕнсен тин тухса калаççĕ, панă ыйтусене пăтраштарса ответлеççĕ. Пропагандис Железков йулташ хăйĕн кружокĕнче вĕренекенсем зањатие хатĕрленнине тĕрĕслемест, пулăшас йенĕпе консуљтацисем туса иртермест, çавсене пула зањатисем çителĕксĕр активлăхпа иртеççĕ.

Железков йулташ зањатисене калаçу формипе иртерсе пырать, çакă вăл вĕренекенсем вуланă тата вĕреннĕ материала ăнланнипе ăнланманнине учота илме пулăшать, анчах çав майпа вĕсем мĕн вĕреннине, вĕренекенсем мĕн вуланине кăна пĕлме пулать, темăран тухакан ыйтусене тарăнăн ăнланнипе ăнланманнине тĕплĕн кăтартса памасть. Зањатине хатĕрленес ĕçе лайăх йĕркелемен пулсан, çавнашкал учот вĕренекенсен ӳсĕмне тарăнăн кăтартса пама пултараймасть. Çавăнпа та кружок руководителĕ кружок ĕçлеме пуçланăранпа вăра палăрмала ӳсĕ вĕренекенсене кăтартса параймасть.

ЧАССР Йуçтици Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Ленинисăма вĕренмели кружок (руководителĕ Филиппăв йулташ) йулашки зањатире „Крестьянский вопрос после завоевания диктатуры пролетариата“ темăна вĕреннĕ. Кружок руководителĕ зањатире ыйтусене тĕрĕс лартать. Кружокра пăхса тухма вăл çакăн пек ыйтусем лартрĕ.

1. Октябрьти Аслă социалисăмла ревољуци çĕнтерсен тепĕр кунĕнчех парти хресчен ыйтăвĕ тăрăх мĕнле задачă лартнă?
2. Рабочи класпа хресченсен сойузĕ çинчен.
3. Ленинăн кооперативлă планĕн тĕп шухăшĕ мĕнре?
4. Талккишпех коллективизаци туса, кулаксен класне пĕтерес политикă çинчен.
5. Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕн тĕп шухăшĕ.
6. Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш сйесĕнче хресченсем çинчен Сталин йулташ мĕн каланă?

Филиппăв йулташ лартнă ыйтусене вĕренекенсем пысăк активлăхпа сӳтсе-йавмала пулнă ĕнтĕ. Анчах ун пек пулмарĕ. Вĕренекенсенчен чылайĕшĕ зањатине хатĕрленмесĕр пынă, тухса калаçнă чух ыйтусене пăтраштарчĕç, тарăнăн тата тĕрĕс ответлемерĕç. Хăшпĕр вĕренекенсем (Агакăвă, Дубровина, Николайĕв) калаçнă чух хăйсен ответлăхне туймаççĕ: тĕрĕс мар, пăтранчăк формулировкăпа, пулса иртнĕ фактăсене час-часах пăсса ответлеççĕ. Акă пĕр тĕслĕх. Дубровинă йулташ 1-мĕш ыйту тăрăх çапла каларĕ: Октябрьти ревољуци çĕнтернĕ хыççăн помещиксен, буржуази тата есерсен влаçне сирпĕтсе антарасси—тĕп ыйту пулса тăнă, терĕ. Çавăн пекех Агакăвă йулташ: Ленинăн кооперативлă планĕн тĕп шухăшĕ мĕнре? ыйту çине тĕрĕс тата татăклă ответ параймарĕ.

Тухса калаçакансем, çавăн пекех пропагандис Филиппăв йулташ та, ыйтусем çине тĕрĕс ответ паман йулташсене критиклемеççĕ, тӳрлетсе памаççĕ, ку ĕнтĕ кружокăн пысăк çитменлĕхĕ.

Водосвет çумĕнчи ПСК(б)П историне вĕренмели кружок зањатине пропагандис, çавăн пекех вĕренекенсем те хатĕрленмесĕр пынă. Çавна пула зањати питĕ çителĕксĕр иртрĕ, вĕренекенсем „Группа освобождения труда“ хăçан, ăçта тата кам организациленине пĕлмеççĕ. Хăшĕсем тата вăл вăхăтра влаç буржуази аллинче пулнă, Морозăв хапрăкĕнче стачкă организацилес тĕлĕшпе группă пысăк вырăн йышăнса тăнă, теççĕ.

Парти вĕренĕвĕ кружокĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тухни—пропагандиссем зањатисене хатĕрленмесĕр пынине лайăх кăтартса пачĕ. Кунтан паллах, вĕренӳ тата зањатисен пахалăхĕ вĕсен айăпĕпе нумай чакать. Пĕр тĕслĕх. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Парти историне вĕренмели кружок руководителĕ Сергейĕв йулташ зањатине хатĕрленмен, вĕренекенсен ыйтăвĕсене татса параймарĕ. Вăл парти историне вĕренмели программă схемипе пăхăнмасăр тирпейсĕр конспект çырнă. Çырнă конспект зањатине пĕр сехет хушши чăсма та арăн-аран çитрĕ. 10 минут кансан, зањати иккĕмĕш сехетĕнче, вăхăта мĕнле те пулин тултарас шутпа, 6-мĕш темă çинчен наглăднăй пособи тăрăх кăтартса вĕрентме тытăнчĕ, анчах Сергейĕв йулташ çав пособипе усă курса ăнлантарма мар, хăй те путлĕн пĕлмест. Çавăнпа та иллӳстраци тунă чух нумай пăтраштарусемпе йăнăшсем турĕ. Темăна çиелтен кăна шăйăрттарса тухрĕ, программăри ыйтусене путлĕн ăнлантарса памарĕ, пĕтĕм ыйтусем çинчен каларĕ пулин те, нимĕн çинчен те каламан пек пулса тухрĕ, çаплипе вара лартнă ыйтусене пĕрне те тарăнăн анализ туса параймарĕ.

Чăвашторг çумĕнчи Парти историне вĕренмели кружок руководителĕ зањатисенче наглăднăй пособисемпе, калăпăр ПСК(б)П истори алљбомĕпе, диаграммăсемпе, географи карттипе, илемлĕ литературăпа усă курмасть.

Йулашкинчен çакна палăртмала. Кашни кружокра зањати пуçламĕшĕнче йе вĕçĕнче 10—15 шер минут хушши вĕренекенсемпе тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тата кулленхи политикă ыйтăвĕсем тăрăх сӳтсе-йавса иртермеле пулин те, çак кирлĕ ĕçе туса пымаççĕ.

ПСК(б)П хула комитечĕ кружоксен ĕçĕсемпе оперативлă йертсе пырассине йĕркелемен. Зањатисем пулса иртмен тата вĕренекенсем кружока çӳремен фактăсене хула комитечĕ 3—4 кун кайарах тин пĕлсе пырать, вĕсем тăрăх халиччен те кирлĕ пек вывăдсем туман. ПСК(б)П хула комитечĕн кружоксенче зањатисем пулса иртсен, тепĕр кунĕнчех вĕсен резуљтачĕсене пĕлсе тăмала, палăрнă çитменлĕхсене вăхăтра тӳрлетсе пымала.

14 çын вĕренсе тухрĕç

ПСК(б)П Шăхасан райкомĕ 1937 çулта Ленинисăма вĕренмели кружок организацилерĕ. Кружокра уйрăмăнах тăрăшса вĕренекенсем Алексейĕв, Соколов, Ваçилйĕв, Филиппăв, Ашмарин, Михайлăв Захарăв йулташсем пулчĕç.

Ийуљ уйăхĕнче кружок хăйĕн ĕçне пĕтерчĕ. Ку кружокран 14 çын вĕренсе тухрĕç. Вĕсенчен Алексейĕв, Ашмарин „отличнă“ палăсемпе, 11 çын „хорошо“ паласемпе вĕренсе тухрĕç.

Михайлăв.

Политвĕренĕве начарлатнă

ЙЕЛЧĔК. (Хамăр корр.). Ийулĕн 16-мĕшĕнче ПСÇЛКС райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленумра хаљхи вăхăтра комсомол политвĕренĕвĕ мĕнле пынине сӳтсе-йаврĕç.

— Пирĕн Тăрăмри „Вперед“ колхозра 11 комсомолец. Пуртеннĕ пек колхозри ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ, политикăпа вĕренесшĕн. Анчах та пирĕн организацире мартăн 14-мĕшĕнчепе пĕр зањати те пулман. Комсомол райкомĕн политвĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ Çеменăв пире йертсе пымасть. Пирĕн халĕ пропагандис та çук,—тет комсомолец Орлов йулташ.

Районĕпе илсен 51 кружокран 4 кружок çеç хăйсен вĕренӳ программисене вĕçленĕ. Ытти кружоксенче çăва тӳхнăранпа та зањатисем пулманпа пĕрех. Комсомол райкомĕн çекретарĕ Вороб-йовпа политвĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ Çеменăв йертсе пыракан кружоксем кăтартулă кружоксем пулман ха. Районĕпе илсен 11 пропагандис çитмест. Май уйăхĕнчепе пропагандиссемпе пĕр çеминар та иртермен.

— Вырăскасси комсомол организацинче çуркуннеренпе пĕр зањати те пулмарĕ. Политвĕренӳ ĕçĕнче сезонлăх пуç пулса тăчĕ,—терĕ комсомолец Козлов йулташ. Комсомол райкомĕн çекретарĕ Воробйов йулташ та:—йанвар, февраљ уйăхĕсенче лайăх ĕçлекен кружоксем пурччĕ, халĕ çук,—тет.

Политвĕренĕве йапăхтарса йанăшăн райкома хытă критиклерĕç.

Т. Майорăв.

Хаçатсене пăхса тухни

Районти хаçатсенчи информаци

Çĕнĕ хыпарсене, районти пурнăçри нумай тĕрлĕ фактсене тĕплĕн çутатасси—районти хаçатсен кулленхи тумали ĕçĕ.

Районти хаçатри информацийн тĕп шухăшĕ—вăл социалисăм строительствин ӳсĕмĕсене кăтартасси, паха ĕçĕн опытне сарасси, куљтурлă пурнăçри çĕнĕ хыпарсене, техникăн, куљтурăн, искусствăн çитĕнĕвĕсем çинчен çырса пĕлтерсе, вулакансен пĕлӳне пуйанлатасси пулать.

Информацилĕ материалсене вулакансем хаçатра часах тупса вулаччăр тесен, районри хаçатсенче „Совет Сойузĕ тăрăх“, „Капиталисăмла çĕршывсенче“, „Хамăр районра“ йатлă уйрăм пайсем туни питех те усăллă пулмала.

Пăшăрханмала пулин те, пирĕн районти хаçатсен страницисенче информацилĕ материалсем питĕ сахал. Пирĕн умра Канаш районĕнчи „Социалисăмшăн“, Çĕмĕрле районĕнчи „Социалисăмла ĕç“, Вăрнар районĕнчи „Социалисăм çулĕпе“ хаçатсен апрел, май, ийуњ, ийуљ уйăхĕсенчи комлекчĕсем. Çак хаçатсенчен пĕри те хăйсен районĕн пурнăçне тĕплĕн çутатса пыраймаççĕ. „Социалисăмшăн“ хаçата вуласан—Канаш районĕнчи, „Социалисăмла ĕç,“ хаçата вуласан—Çĕмĕрле районĕнчи, „Социалисăм çулĕпе“ хаçата вуласан—Вăрнар районĕнчи кулленхи ĕççене уççăн курма çук.

„Социалисăмшăн“ Канашра тухать. Унти вакунсем йусакан савăт, мебĕл хапрăкĕ, МТС, елеватăр, чукунçул станци, депо, темиçе организацисемпе учрежденисем пур. Хулара темĕн тĕрлĕ çĕнĕ ĕççем, çĕнĕ фактсем пулаççĕ. Анчах „Социалисăмшăн“ хаçат апрел, май, ийуњ уйăхĕсенче „Радиовыставкă пулать“ (№ 46), „Вулакансен йышĕ ӳсет“ (№ 49), „Олимпиадăна хатĕрленеççĕ“ (№ 65) тесе çырнисĕр пуçне хула хыпарĕсем çинчен урăх пĕр сăмах та çырса пĕлтермен.

Хаçат колхозлă йалăн пурнăçне çутатма тăрăшать. „Мотор“ колхозри пахчаç Исон йулташ колхоз сачĕшĕн тăрăшни çинчен, Ивановă колхозницă (Анаткас Татмăш) патшалăхран илнĕ пособи укçипе ачисене тумтирсем, кĕнекесем, выљамалисем илсе пани çинчен, Сиккасси куљтурланни, ачасем çурални ӳссе пыни çинчен çырса пĕлтерет хаçат вулакансене. Анчах хаçат çавăн пек хыпарсене номĕртен-номĕртех çырмасть-ха. 52, 53, 54, 60, 63, 66, 67, 73, 74-мĕш номĕрсенче районти çĕнĕ хыпарсене, рабочисемпе колхозниксен пурнăçĕнчи нумай тĕрлĕ фактсене çутатса паман. Çав номĕрсенче официаллă материалсемпе çитменлĕхсем çинчен кăшкăракан заметкăсемсĕр пуçне, совет гражданĕсен тулăх пурнăçне кăтартса нимĕн те çырман.

„Социалисăмла ĕç“ (Çĕмĕрле р.) страницисем информаци тĕлĕшĕнчен питĕ чухăн. Апрел уйăхĕнче вулакансем хаçатра Тукасри колхоз çĕнĕ вите, „Çĕнĕ пурнăç“ колхоз пушар депове тума тытăнни, район центрĕнче ПВХО инструктăрĕсене хатĕрлекен курс уçăлни çинчен çырнисĕр пуçне, район пурнăçĕнчи çĕнĕ хыпарсене урăх нимĕнех те тупса вулама пултарайман. Май тата ийуњ уйăхĕсенче информаци ĕçĕ тата чакса пынă. Икĕ кунта пĕрре тухса тăракан хаçатра сталинла пйатилеткăсен çулĕсенче ӳсее çитеннĕ Çĕмĕрле хули, унти предприйатисем çинчен нимĕн те çырманни вулакансене кăмăла каймĕ ĕнтĕ. 15 пин çын ытла пурăнакан Çĕмĕрле хулинче нимĕнпе çĕнĕ хыпар та çук-ши вара? Хулара та йалта та кашни кун çĕнĕ ĕççем пулса иртеççĕ. Хула ĕççыннисем йалта пулса иртекен ĕççене, колхозниксем хулара пулса иртекен ĕççене пĕлесшĕн. Хаçат редакцийн çавна асра тытмала.

„Социалисăм çулĕпе“ хаçат та (Вăрнар р.) информаци çине тимлĕх сахал хурать. Хаçатра, „Социалисăмшăн“, „Социалисăмла ĕç“ хаçатсенчи пекех, суд хроникине, физкуљтурăпа спорт, библиотекă, кино, спектакăљ, куљтура, рабочисемпе колхозниксем йăла ыйтăвĕсем пирки çырнине тупса вулама çук.

Çак виçĕ хаçат редакцинче ĕçлекен йулташсем районсенчи клубсене, социалисăмлă куљтура çурчĕсене, пуљницăсене, стадионсене, предприйатисене, шкулсене сахал кĕрсе тухаççĕ пулмала. Халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отрăçлисенче ĕçлекенсене, сăмахран, хулари тĕрлĕ предприйатисемпе учрежденисенчи работниксене хаçат ĕçне хутăшăнтарман пирки, редакцисем колхозсем çинчен çырнипе çеç чарăнса тăраççĕ, вулакансен пур сийĕсен ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшмаççĕ.

Совет Сойузĕнчи, çавăн пекех тĕнчери ĕççене те хаçатсем нимĕн çиçтемăсăр çутатаççĕ. Сăмахран, „Социалисăм çулĕпе“ хаçата вулакансем Китайри тата Испанири вăрçă ĕçĕсем мĕнле пынине йĕркелĕн пĕлсе пыраймаççĕ. Хаçат вăл ыйтусем çинчен хутран-ситрен пичетлесе кăларать. Капиталисăмлă çĕршывсенчи рабочисемпе хресченсен, ĕç интеллигенцийн пурнăçĕпе кĕрешĕвĕ çинчен хаçатсем пачăх та çырмаççĕ.

Информаци—хаçатра пысăк вырăнта тăрать, вăл вулакансен тавракурăмне сарать. Пирĕн кашни хаçатра информаци ĕçне йĕркелес пулать.

Кĕперсем çĕмрĕк, йусакансем çук

ТРАК. Тĕрер йалсоветĕнчи çырмасем урлă хывнă 5 кĕпертен пĕри те йусавлă мар. Анчах йалсовет вăл кĕперсене йусас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Çулйĕр çекцийĕн ĕçе сӳнсе ларнă.

Йалсоветĕн ийулĕн 9-мĕшĕнче пулса иртнĕ пленумĕнче çулйĕр ыйтăвне сӳтсе-йавмалаччĕ. Пленум нимĕнле конкретлă решени те йышăнаймарĕ. Колхоз председателĕсем кĕперсем йусас ĕçе пĕр-пĕрин çине йăвантараççĕ. Çавăнпа ĕç вăрăма тăсăлса пырать.

С. Филиппăв.

Партилĕ пропагандăн пысăк задачисем

Бољшевикла пропагандăн пĕтĕм вăйĕ пропагандă ĕçе кĕрсе пынинче, вăл партин практикăлă пысăк задачисемпе çыхăнса тăнинче пулать. Сталин йулташ ПСК(б)П Тĕп комĕн февраљ-мартри пленумĕнче тунă докладпа усă курса, епĕр йутçĕршыв разведкисен ирсĕр меслечĕсене, халăхăн чи хăйар тăшманĕсен—фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă националисла тарçисен тĕрлĕ махинацисене пĕлсе тупма вĕрентĕмĕр. Çав ирсĕрсен пӳтсĕр йăвисене тупса тăрă шыв çине кăларнă, пĕтернĕ, анчах кĕрешӳ пĕтмен-ха.

Пĕтĕм совет халăхĕ Сталин йулташ сăмахĕсене лайăх асра тытать: капиталисăмла йĕритавралăх пур чухне, пирĕн çĕршыва шпионсене тата сăтăрçăсене йарсах тăраççĕ. Сталин йулташ массăсене йаланах мобилизацилĕ хатĕр тытма, ревољуцилĕ сыхăлăха пур майсемпе те хăпартса пыма чĕнни кашни коммунист çинех чи пысăк та вирлĕ задачăсем хурать. Çав задачăсене чи малтан коммуниссен бољшевикла çирĕплĕхне, идейăлă хăватне ӳстернипе çеç ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пулать.

„Пирĕн парти кадрĕсене, айалтан пуçласа çӳле çитиччен, вĕсене государствăн шалти тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва çăмăллăнах чухлама пултарас таран идеологи тĕлĕшĕнчен хатĕрлеме тата политикă тĕлĕшĕнчен пиçĕхтерме пултарсан, вĕсене пысăк йăнăшсем тумасăр çĕршыва йертсе пыма пултаракан пиççе çитнĕ ленинĕçсем, марксиссем туму пултарсан, çакнă туму пĕлсен, вара епĕр пирĕн мĕн пур задачăсен вунна пайĕнчен тăххăрăшне татса панă пулăттăмăр, тесе шухăшлатăп епĕ“.

Коммуниссен идейăлă хăватне ӳстерес ĕçре партилĕ пропагандă питĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Унăн ревољуцилĕ теорине кăштах та пулин пăсние хирĕç кĕрешмеле, массăсене бољшевикла принциплăха тата халăх тăшманĕсемпе пĕр шеллемесĕр кĕрешме, маскăпа витĕнсе пурăнакан чи хăйар тăшмансен тактикине тупса пĕлме вĕрентмеле. Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕр пăркаланмасăр тĕрĕссĕн кĕрешекен борецсене вĕрентсе ӳстермеле. Пире тивĕçлĕ пропагандă кирлĕ, пире массăсене социалисăмлă патриотисăма вĕрентсе ӳстерекен, вĕсене ĕçлĕ творчествăлă çĕкленӳ çулĕпе илсе пыракан тата социалисăм строительствин пур отрăçлисенче те государствă планĕсене пурнăçа кĕртме пулăшакан пропагандă кирлĕ.

Партилĕ пропагандă умĕнче уйрăмăнах халĕ, парти, совет ĕçĕнчи, хуçалăхри тата ытти çĕрти йертсе пырас ĕçе питĕ те нумай çĕнĕ çынсене, Ленин—Сталин партийĕ ĕçне пĕтĕм вăйне хурса тăвакан, анчах политикла пĕлӳлĕхе ӳстерме, бољшевисăма çавăрса илме пулăшу ыйтакан çынсене лартнă вăхăтра чи ответлă задачăсем тăраççĕ.

Партилĕ пропагандăна чылайăх пысăккăн вăйлатса йамала. Апла пулин те чылай организацисенче партилĕ пропагандă халĕ те партилĕ ĕçĕн йулса пыракан участокĕ пулса тăрать?

Халăх тăшманĕсем—фашисăмăн троцкисла бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсем—уйрăмăнах идеологи фронтĕнче сăтăр тума пăхнă тата пур майсемпе те партилĕ пропагандăна йухăнтарса йама хăтланнă. Чылай организацисенче пропагандăна йертсе пырас ĕçе кĕрсе ларса, ирсĕр тăшмансем çак ĕçĕн чи кирлĕ участокĕсене хăйсен контрревољуцилĕ кайашĕсене панă. Вĕсем партилĕ пропагандăн идейăлă содержанине парти организацисем тĕрĕслессинчен пăрса пыма хăтланнă, парти вĕренĕвĕн кружокĕсен ĕçне социалисăмлă строительствăн çивĕч задачисенчен уйăрса хума, кулленхи политикă ыйтăвĕсенчен, предприйати пурнăçĕнчен уйăрса хума тăрăшнă. Вĕсем пропагандă ĕçĕнчи схематисăма тата ытти киревсĕр ĕççене çине тăрсах ырланă, çапла майпа хăйсене валљли парти историне пăсма, тĕрĕс мар вĕрентме, контрревољуцилĕ контрабандă сĕтĕрсе кĕме, коммуниссен ревољуцилĕ сыхăлăхне вăйсăрлатма майсем тунă. Халăх тăшманĕсем йатарласах парти вĕренĕвне организацилĕх йенчен йапăхлатса пынă, парти вĕренĕвĕн кружокĕсен ĕçне аркатса йама хăтланнă.

Халăх тăшманĕсем йатарласах парти вĕренĕвĕн кружокĕсене тĕрĕс мар организациленĕ, вĕренекенсен пĕлӳ çулĕшне тата предприйатире сменăсемпе улшăнса ĕçленине шута илмесĕр тăнă. Вĕсем политграмăтă шкулĕсене пĕтернĕ, сахал пĕлекен çынсене тӳрех аслă кружоксене йарса пынă. Сăтăрçăсем çине тăрса ПСК(б)П членĕн кандидачĕсемпе сочувствуйушисем парти уставне вĕренмесĕр тăрса йулмала тума хăтланнă. Халăх тăшманĕсем кружоксенче вĕренекенсене парти историне вĕренсе пĕтерме май памасăр тăнă, усал шухăшсемпе программăна вĕренессине октябрьченхи тапхăр çинче тытса тăнă, çулсеренех „малтан“ пуçлама хушнă. Парти вĕренĕвĕн кружокĕсем çавăн пек пĕр вырăнтах тапăртатса тăнине тата вĕсем партин практикăлă çивĕч задачисенчен уйăрăлса тăнине ырласа, сăтăрçăсем коммуниссен парти вĕренӳвĕнчи интересне пĕтерсе хума, кружока çӳрессине вăйпа çӳретнĕ ĕç пек туса хума, партилĕ пропагандăна пăсса пăрахăçа кăларма, коммуниссен ревољуцилĕ сыхăлăхне мăкалатма хăтланнă.

Халăх тăшманĕсем пур майсемпе те пуçарулăха путарса пынă, пропагандă ĕçне казенщинă, формалисăм тата бӳрократисăм кĕртсе пынă.

Троцкисла-бухаринла кайашсене çĕмĕрсе тăкни парти вĕренӳне йĕркелесси лайăхланасси патне илсе пычĕ. Çапах та партилĕ пропагандă ĕçĕнче халĕ çитменлĕхсем нумай-ха. Партин йертсе пыракан органĕсене суйлана чухне питех те усăмлăн палăртнă тăрăх, партин чылай организацисем пропагандă ĕçĕнчи сăтăрла ĕççен йулашкисене питех те вăраххăн тата çителĕксĕр пĕтерсе пыраççĕ.

Сталин йулташ ПСК(б)П истори учебникне çыракансем патне йанă çыру пирĕн пропагандăла кадрсене валљи пысăк та тĕплĕ программă пулса тăрать. Сталин йулташ парти историне мĕнле çутатса пама, историлĕ фактсене мĕнле майпа чăннипех те марксисăмла ăнлантарса пама хушни турремĕнех пирĕн шкулсемпе кружоксене те тивет. Парти историне Сталин йулташ хушнă пек çутатса парасси—ăна идейă тĕлĕшĕнчен пуйан, кăмăла кайакан, интереслă та килĕшӳлĕ тăвассине пĕлтерет.

Сталин йулташ кăтартăвĕсемпе усă курса çеç кружоксенче фактăсене пăсса каланисене, схематисăма тата ытти киревсĕрлĕхе ăнăçлăн пĕтерме, коммуниссене идеологи тĕлĕшĕнчен лайăхрах ӳстерме тата политикла çирĕплетме, вĕсене партин мĕн пур пысăк ыйтусенчи принциплă çулйĕрне ăнланса илме тата уншăн хăйсен кулленхи практикăлă ĕçĕнчи кĕрешӳре пулăшма пулать.

Апла пулин те парти организацисен чылай руководителĕсем Сталин йулташ парти истори учебникне çыракансем патне йанă çырура кăтартса панисене парти вĕренĕвĕн кружокĕсенче мĕнле пурнăça кĕртсе пынине тĕрĕслеме кирлĕ тесе шутламан. Паллах, ун пек тĕрĕслесси пропагандăна тивĕçлипе йертсе пыма ыйтать, вăл ĕç патне парти организацисен чылай руководителĕсем çывхарайман-ха.

Пропагандă пахалăхĕ пысăк пултăр тесен, чи малтан пропагандиссене пĕлмеле, вĕсен ĕçне кулленех вĕренсе сăнаса пымала, вĕсене йертсе пымала, вĕсене сĕнӳсемпе, критиклесе пулăшмала. Фактсем акă мĕн çинчен калаççĕ: пирĕн чылай парткомсем çак задача çителĕксĕр татса параççĕ.

Тивĕçлипе йертсе пыни çук пирки пропагандиссем час-часах зањатисенче тĕрĕс мар меслетсемпе усă кураççĕ. Хăшпĕр кружоксенче пропагандиссем зањатисене программăпа мар иртереççĕ, теприсенче—ыйтусем çине ответсем панипе çеç чарăнса тăраççĕ, виççĕмĕшсенче—учебниксем вулаççĕ кăна. Нумай кружоксенче плакатсемпе, диаграммăсемпе усă курассине (вĕсем парти кабинечĕсенче пур пулин те) ытлашши ĕç тесе шутлаççĕ. Вĕренекенсем те, пропагандиссем те чылай чухне зањатисене начар хатĕрленсе пыраççĕ. Хăшпĕр пропагандиссем зањатисене иртнĕ çулта, йе васкавлă хатĕрленĕ конспектсемпе пыраççĕ; вĕренекенсем те çавăн пекех пĕр кружокрах темиçе çул хушши вĕренсе илнĕ пĕлӳ çине шанса пыраççĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ кружоксен ĕçĕнчи çитменлĕхсем. Çаксем пурте час-часах пропагандиссене çителĕклĕ тимлĕн суйласа илмен пирки, вĕсен идейăлă-политикăлă пĕлӳне хăпартассишĕн начар тăрăшнă пирки, организацилĕ ĕçе йапăхтарса йанă пирки, конкретлă, оперативлă йертсе пыман пирки пулаççĕ. Чылай райкомсем пропагандиссемпе паллашасси, кайран вĕсене райкомсен бӳро ларăвĕнче çирĕплетесси çинчен ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пымаççĕ.

Кирек хăш предприйатире те пропагандăлă ĕçе пирвайхи хут тăвакан йулташсене тупма пулать. Вĕсене йаланах пулăшса пыни кирлĕ. Питĕ те паллă, пропагандиссене курссем урлă хатĕрлесси çине, семинарсем йаланах ĕçлени çине, лекцисем çине уйрăмăнах çаврăнса пăхмала. Апла пулин те пропагандиссен курсĕсене чылай вырăнсенче начар организациленĕ. Пермре тата Свердловскра семинарсенче мĕн пур пропагандиссенчен 60 процентчĕ кăна пулать. Курск тата ытти облаçсенчи чылай районсенче семинарсем пачах ĕçлемеççĕ. Нумай чухне семинарсем пĕр тĕрлĕ кăна ĕçлеççĕ: йе

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

Тырпулсене уйран вӑхӑтра тата пысӑк пахалӑхпа пухса кӗртер!

Малта пыракансен опычӗсене анлӑн сарса пырар!

Ответлӑ тапхӑр пуçланчӗ

Тырпулсене уйран пуçтарса кӗртесси çинчен комбайнерсемпе комбайнеркӑсен канашлавӗнче халӑхсен аслӑ çулпуçӗ Сталин йулташ çапла калана: „Есӗр пӗлеттӗр тӗштырӑ хуçалӑхӗнче чи ответлӑ ӗç вал—пуçтарса кӗртесси. Пуçтарса кӗртесси вӑхӑтла ӗç, вӑл кетме йуратмаçт. Вӑхӑтра пуçтарса кӗртрӗн,—вылъаса илетӗн, пуçтарасра кайа йултӑн—вылъаса йатӑн".

Çакӑнтан ӗнтӗ тырпула пуçтарса кӗртесси мӗн пек пысӑк тата ответлӑ ӗç пулса тӑни пуриншӗн те паллӑ пулса тӑмала. Анчах Шупашкар районӗнчи партипе совет тата çӗрӗç организацисенче ӗçлекен йулташсем Сталин йулташ асӑрхаттарса панине маннӑ. Шупашкар районӗнчи чылай колхозсем улӑ çулма кайа йулса тухнипе колхозсенчи ӗç вайӗ халӗ улӑхрах пурӑнаӑ. Машинӑ-трактӑр станцинче ӗçлекенсем те тырпула хӑвӑрт тата тӑккаламасӑр пуçтарса кертессишен бољшевикла кӗрешмеççӗ. Государствӑ планӗ тӑрӑх, каçал Шупашкар районӗнчи машинӑ-трактӑр станцин комбайнсемпе 1.600 гектар çинчен пуçтармала пулсан, вӗсем хӑйсем ирӗкӗпе комбайнсемпе ӗçлемели плана пӗчӗклетсе, 1.252 гектар хӑварнӑ. Çакӑнпа районри партипе совет организацийӗсем те килӗшнӗ. Йангилъдинӑ колхозӗнче те жнейкӑпа тырӑ вырма шутламаççӗ, жнейкӑпа ӗçлеме ӗç нормине те туса хатӗрлемен. Иккасси колхозӗнче жнейкӑпа пӗр сменӑра 3 гектар çеç вырма пӑхнӑ.

Партилӗ-массӑлӑ ӗçе ӑнаçлӑн туса пыни стахановла йухӑма сарса йама, пысӑк пахалӑхлӑ ӗçлесе тырпулсене пӗр тӑккаламасӑр пуçтарса кӗртме пулӑшакан чи паха услови пулса тӑрать. Çакна Иккассинчи парти пуçламӗш организацийӗ пайанччен тӗплӗн туса пымасть. Партилӗ-массӑлӑ ӗçе туса пыма бригадӑсем çумне агитатӑрсем çирӗплетнипех лӑпланса ларнӑ. Бригадӑсем çумне çирӗплетнӗ агитатӑрсем мӗнле ӗçленине тӗрӗслесе тӑманнине пула, ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн тата парти Чӑваш Обкомӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тырпулсене пуçтарса кӗртесси çинчен йышӑннӑ постановленисене бригадӑсенче тата пӗрлешӳлӗ пухусенче ӑнлантарса паман.

Кӗлтесем çыхассипе рекорд тунӑ

ШӐНКӐРТАМ. Кзыл Чишмари „Майак" колхоз членӗсем Сафиуллин Файзула, Абайдулинӑ тата Сабирсановӑ йултащсем тырпулсене уйран пуçтарса кӗнӗ çӗрте пысӑк çитӗнӳ тунӑ. Вӗсем ӗçе çапла йӗркеленӗ. Абайдулинӑ тата Сабирсановӑ колхозницӑсем кӗлте çыххисене хатӗрлесе пынӑ, Сафиуллин пӗччен çыхса пынӑ. Çапла ӗçленипе вӗсем пӗр кун хушшинче виççӗн 4.900 кӗлте çыхнӑ, кашни çын нормӑна 400 процент ытларах тултарнӑ.

М. Митрофанӑв.

Государствӑна тырӑ параççӗ

** Тутаркассинчи (Сӗнтӗрвӑрри районӗ) „Моряк" колхоз иртнӗ çулхи тырра 1938 çулшӑн государствӑна пама тытӑнчӗ. Ийулӗн 17-мӗшӗнче 105 пӑт таса тырӑ леççе пачӗ. Çакӑ кӑçалхи обйазатӗлствӑна 50 процент тултарни пулать.

И. Данилӑв.

** Чучукассинчи (Шупашкар р.) Молӑтӑв йачӗпе тӑракан колхоз районра пур ӗçсемпе те малта пырать. Ку колхоз тырӑ вырма тухма хатӗр тӑрать. Тырӑ вырма тухиччен Молӑтӑв йачӗпе тӑракан колхоз пур тӗштырӑсем тӑрӑх та государствӑна тырӑ парса татрӗ. Пӗтемпе 11 центнӗр ытларах ыраш, 2,7 центнӗр кӗрхи тулӑ, 9,92 центнӗр ытти пӗрчӗлӗ тырӑсем панӑ. Çавӑн пекех колхоз государствӑна 120 центнӗр утӑ парса, обйазатӗлствӑна 100 процентчӗпех пурнӑçланӑ.

Й. Ваçилйӗв.

Колхозниксем ӑмӑртура

ПАТӐРЙЕЛ, ийулӗн 19-мӗш (телефон тӑрӑх). Карапай Шӑмӑрша йаленчи „Хӗрлӗ партизан" колхоз Сӑкӑтри „Хӗрлӗ йалав" колхозпа ӑмӑртса ӗçлет. Вӗсем хӑйсем çине кашни гектартан 25-шер центнӗр тӗштырӑ пуçтарса кӗме обйазатӗлствӑсем илнӗ. Халӗ, тырӑсене вырса пуçтарнӑ вӑхӑтра, вӑйла тырпулшӑн кӗрешес ӗç татах ӑнлӑн саралса пырать.

„Хӗрлӗ партизан" колхозникӗсем тырӑсене вырса пуçтарас ӗçре стахановла майсемпе ӗçлеççӗ. Ку колхоз ыраш вырма ийулӗн 15-мӗшӗнче тухрӗ. Чылай колхозниксем хӑйсен ӗç нормисене малтанхи кунсенчех ытлашшипе тултарчӗç. 4-мӗш бригадӑри машинист С. Гаврилӑв нормӑ тӑрӑх 6 гектар вырас вырӑнне 10 гектар вырчӗ, иккӗмӗш бригадӑри машинис П. Сидӑрӑв 7 гектар вырчӗ. 4-мӗш бригадӑри кӗлте çыхакансем: Силъверстӑвӑ Марфӑ, Пеъковӑ Марийӑ 875-шер кӗлте çыхса пычӗç.

Сӑкӑтри „Хӗрлӗ йалав" колхозра та вӑйлӑ тырпулшӑн стахановла йухӑм анлӑн саралса пырать. 1-мӗш бригадӑри машинис З. Убасӗв жнейкӑпа кашни кунах 9—10 гектар вырса пырать. Кӗлте çыхакансем: Бакашкинӑ Олъгӑ 1200 кӗлте, Пироговӑ Йелизаветӑ 1070 кӗлте, Артамовӑвӑ Йелизаветӑ 1000 кӗлте, Алъакинӑ Анастаçийӑ 920 кӗлте çыхса пыраççӗ.

Çапла ӗçленипе, пӗррӗмӗш бригадӑ 4 кун хушшинче 39 гектар ыраш вырса пӗтерчӗ, план тӑрӑх ӑна 7 кун хушшинче вырса пӗтерме пӑхнӑ пулнӑ. Пӗррӗмӗш бригадӑ колхозра пур бригадӑсенчен те малта пырать.

Ник. Пушкин.

Çийӗнчех пӗтерес пулать

ЙЕТӖРНЕ. Ийулӗн 17-мӗшӗнче районри колхозсем суйласа тырӑ вырма тухрӗç. Пайанхи кун тӗлне 52 колхозра тырӑ выраççӗ. Полъанкӑри Кирӑв йачӗпе тӑракан колхоз тырпулсене пуçтарса кӗме тӗплӗн хатӗрленсе тухрӗ. Кунта колхозниксем валъли столовӑй, ачасем валъли йаçлӗ уçнӑ. Тырӑ вырнӑ çӗрте жнейкӑсемпе туллин усӑ кураççӗ. Çавнашкалах, Кумаккассинчи „Клевер" колхозра та жнейкӑсене туллин ӗçлеттереççӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем ӑмӑртса ӗçленипе ӗç нормине ытлашшипех тултарса пыраççӗ. Й. Мартынӑвӑ, Ф. Никитинӑ колхозницӑсем çурлапа 500-шер кӗлте вырса, нормӑна 200-шер процент тултараççӗ.

Районра çакӑн пек колхозсем сахалтарах. Ытти колхозсем тырпулсене пуçтарса кӗме хатӗрленмесӗр тухрӗç. Жнейкӑсемпе ӗçлессине хаклаламаççӗ. Кӗçӗн Шемертенти „Çӗнӗ пурнӑç" колхозра 8 жнейкӑ йусавсӑр, вӗсемпе ӗçлеме май çук. Кӑкшӑмри Илйич йачӗпе тӑракан колхозра та жнейкӑсене йусаман пирки çурлапа выраççӗ. Кунта ампарсене таçатса хатӗрлемен.

Шӑматри „Ударник" колхоз жнейкӑсене халъ çеç йусама тытӑннӑ. Молотилкӑ çаплах çӗмрӗк ларать-ха. Мӑн Йӗкӗтри „Хӗрлӗ Октабӗр" колхоз тырӑ вырма хатӗрленмесӗр тухрӗ. Кунта ӗç планӗ çук пирки колхозниксем мӗнле ӗçре ӗçлессине те пӗлмеççӗ. Малтанхи кун иккӗмӗш бригадӑра тырӑ вырма 40 çын тухас вырӑнне 18 çын çеç тухнӑ.

Çапла ӗнтӗ Йетӗрне районӗнчи колхозсенче тырӑ вырма тухнӑ малтанхи кун ӗçе тӗрӗс организацилемени, машинӑсемпе çителӗклӗ усӑ курманни палӑрчӗ. Çав çитменлӗхсене малашнехи ӗçсенче тумала мар. Райçӗрӗç пайӗн колхозсене татӑклӑн йертсе пымала, тырпулсене вӑхӑтра тата тӑкаксӑр пуçтарса кӗме пулӑшмала.

Н Цветков.

Уйа хатӗрленмесӗр тухнӑ

Ийулӗн 18-мӗшӗнче Шупашкар районӗнчи Шемшер, Чулкасси, Шешкенер тата Йамбулатӑвӑ колхозӗсем пуçласа ыраш вырма тухрӗç. Шутпала уйри тырпулсене пуçтарса кӗртме тухиччен кирлӗ ӗçхатӗрӗсене тата йалхуçалӑх машинисене йусаттарма вӑхӑт та ытлашшипех пулнӑ. Апла пулин те Чулкасси колхозӗ тырӑ вырма хатӗрленсе çитмесӗрех тухрӗ. Жнейкӑна уйа илсе тухнӑ хыççӑн çеç йусама тытӑннӑ. Колхозниксенчен нумайӗшӗ çурлисене шӑллаттармасӑр вырма тухнӑ.

А. Николайӗв.

Партилӗ пропагандӑн пысӑк задачисем

(Й У Л А Ш К И)

пропагандиссен пӗлӳне ӳстерме тӑрӑшаççӗ, йе вӗсене кружокри пулас занъатине хатӗрленме пулӑшаççӗ. Иккӗшне те пӗрле туса пыма—тавçӑрса илни çитмест.

Пропагандиссен кадрӗсене хатӗрлессине тата вӗсене вӗрентессине вӗсем хӑйсем малала кайни не туйса илмеле тата кашни çулах вӗсем çӗнӗ материалсем вӗренмеле туса йӗркелемеле.

Парти вӗрентӳне организацилессинче болъшевикла йӗркелӗх çукки пуринчен те пысӑк çитменлӗх пулса тӑрать. Кружоксене час-часах тӗрӗс мар организацилеççӗ. Парти уставне те пӗлмен йулташ сенех тепӗр" чухне тӳрех парти историне вӗренмели кружока кучараççӗ.

Парти вӗренӗвӗнчи чи пысӑк çитменлӗх вӑл кружоксем халӗ те пӗр вырӑнтах тапӑртатса тӑни пулать. Поныревский районӗнче (Курск облӑçӗ) ПСК(б)П историне вӗрентекен 3 кружок 1936 çулти октабӗрччен кӑçалхи апрел уйӑхне çити программӑн пӗррӗмӗш темине çеç вӗреннӗ. 1937 çулта Свердловск облӑçӗнче парти вӗренӗвӗнчи 3 028 кружокран 192 кружокра çеç программӑна вӗренсе пӗтернӗ. Акӑ тепӗр питех те тӗлӗнмеле пример: Колъчугинӑри Орджоникидзе йачӗпе тӑракан савӑтра (Иванӑвӑ облӑçӗ) ПСК(б)П членӗнче 1917 çултанпа тӑракан Данилӑв йулташ 15 çул ӗнтӗ (!) парти истори кружокӗнче вӗренет, çапах та халӗ те вӗренсе программӑ вӗçне çитеймен-ха. Задачӑ акӑ мӗнре тӑрать: парти комитечӗсем пропагандиссен планӗсене çирӗплетмеле тата кружокра программӑ тӑрӑх палӑртнӑ срокссенче вӗренсе пыннине тӗрӗслесех тӑмала.

Парти организацисем час-часах пропагандиссене тӗрлӗ ӗçсем парса тултараççӗ. Парти организацисен чылай руководителӗсем, вӑл шутрах районри комитетсен çекретарӗсем те, кружок занъатинче пулма, пропагандиспа тата вӗренекенсемпе калаçса вӗсене кирлӗ кӑтартусем пама „вӑхӑт тупаймаççӗ". Вӗсем партилӗ пропагандӑпа сводкӑсем урлӑ паллашма йе партин çак чи кирлӗ ӗçне пӗтӗмӗшпех ытти работниксене шанса пама йуратаççӗ.

Пропагандӑна йертсе пынӑ чухне лайӑх пропагандиссен усӑлӑ опычӗсемпе питӗ сахал усӑ кураççӗ. Лайӑх ӗçлекенсем сахал мар. Турӗ, кӑмӑллӑ, парӑнса ӗçлекен нумай пропагандиссем массӑсем хушшине болъшевикла сӑмаха пысӑк хавасӑлӑхпа илсе пыраççӗ, чӗререн йуратса Ленин—Сталин вӗрентӗвне массӑ хушшине сараççӗ. Сӑмахран, Мускаври Каганович йачӗпе тӑракан „Шарикоподшипник" савӑтӗнчи пропагандис Ананйӗв хӑйӗн кружокӗнче программӑна питӗ лайӑх вӗрентсе пӗтерчӗ. Кружокри 10 вӗренекенрен 5-шне пропагандиссем пулса ӗçлеме хатӗрленӗ. Кун пек примерсем нумай. Лайӑх пропагандиссен опытне пичетре тӗплӗн çутатса пымала, çамрӑк пропагандиссене ӗçлеме вӗрентсе пымала. Йулашкинчен, çакӑн çине те кӑтартса хӑвармала: парти вӗренӗвӗн хӑшпӗр кружокӗсенче вӗсен занъатийӗсем вӑхӑтӗнче вӗренекенсене кулленхи политикӑ ыйтӑвӗсемпе тата тулти политикӑ ыйтӑвӗсемпе паллаштарма кирли çинчен ПСК(б)П Тӗпкомӗ кӑтартса панине пурнӑçа кӗртмеççӗ.

Епӗр кунта чылай хуласем тата районсем тӑрӑх примерсем илсе кӑтартрӑмӑр. Анчах партилӗ пропагандӑна хаклаиан тата ӑна начар организацилевӗ фактсем совйузӑн нумай районӗсенче пур.

Парти организацисен руководителӗсен хӑйсен пропагандӑ ыйтӑвӗсемпе тимлӗн ӗçлемеле, çак чи кирлӗ участкӑра тӑшманла ӗççен йулашкисене хӑвӑрт пӗтерсе тата вӑл пурнӑçран уйӑрӑлса тӑнине татӑклӑнах тӗп туса, партилӗ пропагандӑна социализмлӑ строителствӑн практикӑлӑ пысӑк задачисене татса парас ӗçри хӑватлӑ хӗçпӑшал туса хумала. Çак кӗрешӗве пуçарма тахçанах вӑхӑт ӗнтӗ.

М. Рыъский.



Орджоникидзе йачӗпе тӑракан станкосавӑтри 3-мӗш цехра ийунӗн 20-мӗшӗнче стахановла декадӑ пуçланнӑ. малтанхи кунах цех программӑна 287 проц. тултарнӑ. Вӑл кун халӗ промакадеминче вӗренекен, орденоносӗц, ССРС Верховнӑй Совечӗн депутачӗ И. И. Гудӑв йулташ нормӑна 460 проц. тултарнӑ. Çав цехрах Гудӑв йулташ хӑйӗн паллӑ рекорчӗсене тунӑ.
ӲКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: Гудӑв йулташ ӗçре.

Б. Фишман фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

ТИРПЕЙСӖРЛӖХ ТАВРАШӖНЧЕ

Епӗр Кӳкеçрен кӑнтӑрпа хӗвеланӑç йенче ултӑ километрта ларакан пӗр пысӑк йала пырса кӗтӗмӗр.

—Ăçта ку йалсовет канцелъарийӗ? — ыйтрӑмӑр урампа иртсе пыракан йулташран.

Вӑл пирӗнпе шӳт тӑвас йеврӗлӗ кӳренмеле факт каласа пачӗ. Ӗç çапла пулнӑ иккен.

Районтан пынӑ уполномоченнӑй, йалсовет хӑш çуртра вырнаçнине çынсенчен ыйтса чӑрманас мар тесе, хӑйех вывӗскӑ тӑрӑх шыраса тупма тӑрӑшнӑ. Пур çӗре те çитнӗ вӑл: колхоз правлени умӗн, ача сачӗ тӗлӗнчен, кооператив правлени çурчӗ патӗнчен, фелъдшӗр тата сӗт-çу хатӗрлев пункчӗсенчен иртнӗ. Йулашкинчен шкул патне çитнӗ.

—Ку шкул пулмала-ха,—тенӗ вӑл вара кӑшт чарӑнса шухӑшланӑ хыççӑн.

Кунта нумайах шухӑшласа тӑман вӑл. Шкул патӗнчи кӳлӗ çумӗнчен пӑрӑнса, кӑшт айакарах пӑч-пач карта йуписем ларакан вырӑна кайнӑ. Кунта сат вырӑнӗ пулнӑ мӗн. Сат тавра хурӑн. Улмуççи йӑвӑççисем нумай. Вӗсем йӑлтах йухӑнса кайнӑ ӗнтӗ. Сат варринче ӗлӗк чиркӳ пулнӑ çурт. Халӗ клуб вӑл. Питӗрӗнсе тӑрать.

— Йалсовет канцелъарийӗ те çак тирпейсӗрлӗх таврашӗнче пулмала, — шухӑшланӑ вӑл.

Кӑшт маларах утсан, клубран айакрах та мар ларакан пӗр пӗчӗкрех пӳртӗн ванчӑк кантӑкӗ вырӑнне хӑма çапса лартни курӑнса кайнӑ. Патне пырса пӑхнӑ. Вӑл хӑма çине çапла çырнӑ:

„ШУПАШКАР РАЙОНӖНЧИ
ИККАСИ ЙАЛСОВЕЧӖ".

Вӑл çапла пулнӑ: такçан ку çуртӑн кантӑкӗ ваннӑ. Çийӗнчех лартма кантӑк тупайман мӗн. Вара вывӗскӑна хӑйпӑтаççӗ те ванчӑк кантӑк вырӑнне çапса лартаççӗ. Халӗ кантӑкне лартнӑ. Вывӗскине пушар сарайӗ патне кайса ыватнӑ.

Епӗр çак пушар сарайӗ патӗнче выртакан вывӗскӑран йалсовет канцелъари ӑçтине тупрӑмӑр.

Есӗр вӑл йалсовета пырас пулсан, çапла тӑвӑр: малтан клуб патне ыра. Унтах колхозӑн пушар сарайӗ. Вӑл сарай айӑккинче йалсовет вывӗски выртать. Вӑл вывӗскӑран йалсовет 15—20 утӑмран айакрах мар. Тул йенчен те, шал йенчен те кулътурӑсӑр çурт. Тӳрех унта кӗрӗр.

Ив. МОÇЕЙӖВ.

Пулас лъотчиксем

Шупашкарти аероклубра производствӑран уйӑрӑлмасӑрах вӗçев ӗçне вӗренекен курсантсем теорипе вӗренсе пӗтернӗ хыççӑн, майӑн 24-мӗшӗнче самолъотсемпе вӗçме тытӑнчӗç. Кашни группӑ çумне пӗрер инструктӑр çирӗплетнӗ.

Курсантсем тӑрӑшса, йуратса вӗренеççӗ. Кашнийех вӗçев ӗçне часрах, лайӑхрах вӗренсе çитсе, инструктӑрсӑр, хӑйсем тӗллӗн вӗçме пуçласшӑн тӑрӑшаççӗ. Хӑшпӗр учлъотсем хӑйсем тӗллӗн вӗçме пуçларӗç те ӗнтӗ. Инструктӑрсемсӗр чи малтанах Наумӑв, Борисӑв тата Кузнецов комсомолецсем вӗçрӗç. Вӗсем теори вӗреннӗ чухне те лайӑх паллӑсем илнӗ. Хӑйсем тӗлӗн вӗçнӗ вӑхӑтра вӗсем лайӑх тӗслӗхсем кӑтартрӗç.

Курсантсем кӑнтӑрла производствӑра ӗçлеççӗ. Сӑмахран, Борисӑв йулташ педучилищӑра 2-мӗш курсра вӗренет, Кузнецов й.—Водосветра монторта, Наумӑв й.—Когизра ӗçлеççӗ.

З Митрофанӑвӑ.

Канмали çуртсене кайрӗç

СӖНТӖРВӐРРИ. 1937—38 вӗревӳ çулне ӑнаçлӑн вӗçленӗ хыççӑн, Сӗнтӗрвӑрринчи çӗрйӗркелӳ тата мелиораци техникумӗн дирекцийӗпе профком вӗренӳри отличниксемпе ударниксене 12 студента канмали çуртсене кайма путовкӑсем парса премилерӗç. Вӗсем пурте комсомолецсем.

Путовкӑ илнӗ хӑшпӗр йулташсем канмали çуртсене тухса кайрӗç.

Г. Смирнов.

С у д

Йалкора хӗненӗшӗн

Апаш йалӗнчи (Шупашкар районӗ) Иван Антипӑв районри „Колхозник çулӗ" хаçат çине тата республикӑра тухса тӑракан хаçатсем çине çырса тӑнӑ. Вӑл хӑйсен йалӗнчи Борис Çергейӗв йалта хулиганланса çӳрени çинчен заметкӑ çырнӑ. Анчах вӑл материала редакцине йарииччейех Çергейӗв хӑй тупса вулвнӑ. Çакӑн хыççӑн Çергейӗв Антипӑва йунама пуçланӑ.

Майӑн 7-мӗшӗнче Çергейӗв ӗççе ӳсӗрӗлнӗ те Антипӑва тытса хӗненӗ.

Ку ӗçе Шупашкар районӗнчи халӑх сучӗ пӑхса тухса Çергейӗва 5 çул хушши тӗрмере хупса усрамала турӗ.

КӖСКЕН

◆◆ **Пионерсен лагерӗ.** Ийулӗн 9-мӗшӗнче Пуснаркассинчи туллимар вӑтам шкул çуртӗнче (Сӗнтӗрвӑрри р.) районри пионерсен лагерӗ уçӑлчӗ. Ку лагере йатарласа вӗренӳ отличникӗсемпе ударникӗсем валъли организациленӗ.

Лагерте пӗтӗмпе тӑватӑ сменӑ, кашни сменӑра 50-шар пионер канмала. Пӗррӗмӗш сменӑна 50 пионер пухӑннӑ.

■■ **„Ленин в Октябре" филъм колхозра.** Ийулӗн 4-мӗшӗнче Калмӑкассинчи „Сталь" колхозра (Тутаркас районӗ) „Ленин в Октябре" йатлӑ кинокартинӑ кӑтартрӗç. Кино курма 250 çын пухӑннӑ. Екран çинче Ленинпа Сталина курсан колхозниксем ура çине тӑрса питӗ хытӑ алӑ çупрӗç.

К. Николайӗв.

ССР Сойузӗн Оборонине тӗреклетмели государствӑн шалти займӗ

Проигрышсӑр кӑларӑм

Выигрышсен иккӗмӗш тиражӗн справкӑлӑ таблици

Выигрышсен тиражӗ 1938 çулти ийулӗн 11—12-мӗшӗсенче Сталинск хулинче (Новосибирск облӑçӗ) пулса иртнӗ. Тиражра 43.703.800 тенкӗлӗх 265.000 вылъав тухнӑ.

ССР Сойузӗн Оборонине тӗреклетмели займӑн иккӗмӗш тиражӗнче займӑн проигрышсӑр кӑларӑмӗн мӗн пур 53 разрйадӗнче те çерисемпе çак облигацисен номӗрӗсем çине вылъавсем тухнӑ (вылъав суммине облигаци çинче кӑтартнӑ хакне те кӗртеççӗ):

Çерисен №№	Облигацисен №№	Вылъаса илнӗ тенкӗпе	Çерисен №№	Облигацисен №№	Вылъаса илнӗ тенкӗпе
20198	35*)	500	29400	16*)	500
20426	03*)	500	29450	1—50	200
21139	21*)	500	29462	1—50	150
21158	36*)	500	29463	38*)	500
21188	1—50	150	29471	1—50	200
21320	23*)	500	29765	07*)	500
21533	29*)	500	29854	18*)	500
21549	34*)	500	30058	1—50	150
21667	1—50	150	30163	22*)	500
21769	1—50	150	30505	08*)	500
21791	1—50	200	30553	07*)	1000
22075	1—50	150	31066	01*)	500
22133	06*)	500	31077	1—50	150
22226	1—50	150	31129	45*)	500
22443	26*)	500	31189	1—50	150
22585	42*)	500	31229	1—50	200
22923	28*)	500	31382	06*)	1000
23001	1—50	200	31587	15*)	500
23160	45*)	500	31688	26*)	500
23447	43*)	500	31783	12*)	1000
23638	1—50	200	31800	1—50	150
23915	1—50	150	32400	44*)	500
23935	38*)	500	32530	1—50	200
24350	50*)	500	33388	47*)	500
24453	1—50	150	33552	1—50	150
24709	1—50	200	33573	40*)	500
24765	49*)	500	33591	37*)	500
24820	1—50	200	33832	14*)	500
24892	1—50	150	33851	1—50	150
25055	1—50	200	34467	1—50	200
25076	1—50	150	34726	36*)	500
25163	27*)	500	34840	45*)	500
25178	31*)	500	35012	21*)	500
25278	1—50	150	35088	42*)	500
25300	1—50	200	35329	10*)	500
25752	30*)	500	35331	13*)	500
25842	13*)	1000	35929	1—50	150
25911	03*)	500	36464	03*)	500
26345	13*)	3000	36636	1—50	150
26359	46*)	500	36639	1—50	200
26580	1—50	200	36658	1—50	150
26684	1—50	200	36775	1—50	150
26716	1—50	200	36860	35*)	1000
27467	03*)	500	36904	49*)	500
27580	02*)	500	37078	1—50	200
27820	1—50	150	37215	36*)	500
27966	42*)	500	37261	48*)	500
27995	1—50	150	38245	28*)	500
28320	1—50	200	38668	1—50	150
29354	1—50	200	39083	1—50	200

*) Çак çеринчи облигацисен ытти 49 номӗрӗсем кашнийех 150-шер тенкӗ вылъаса илнӗ.

Пӗлтерни

Пайан, ийулӗн 21-мӗшӗнче, каçхине 7 сехетре Шупашкарти пропагандиссен шкулӗнче (Чернышевскипе Роза Лӳксембург урамӗсен кӗтесӗ) партийе çӗнӗрен илнисемпе вӗсене рекомендаци паракансен канашлӑвӗ пулать. Шупашкарти пуçламӗш парторганизацисен çӳлте асӑннӑ йулташсене канашлӑва йамала.

„Чӑваш Коммунӗ" хаçат редакци.
ПСК(б)П хула комитечӗ.

Ответлӑ редактӑр Н. М. СЕМЕНАВ.

ЧӐВАШСЕН ПЕДАГОГИКӐ РАБФАКӖ

1938—39 вӗренӳ çулӗнче

студентсене вӗренме илесси çинчен пӗлтерет

Вӗренме кӑнтӑрлахи уйрӑмӑн пӗррӗмӗш, иккӗмӗш, виççӗмӗш курссене тата каçхи уйрӑмӑн виççӗмӗшпе тӑваттӑмӗш курссене илеççӗ

Вӗренме кӗмели йӗркесем:

рабфака вӗренме пур граждӑнсене те 18 çултан пуçласа 30 çула çитнисене; пӗррӗмӗш курса туллимар вӑтам шкул программи тӑрӑх, иккӗмӗш курса 8-мӗш клас, виççӗмӗш курса 9-мӗш клас таран пӗлӳ илнисене илеççӗ.

Пӗррӗмӗш курса кӗрес текенсенчен

вырӑс чӗлхи (сӑмахпа, çырупа), математикӑ (сӑмахпа, çырупа), чӑваш чӗлхи (сӑмахпа, çырупа), вырӑс литератури, ССРС Конституцийӗ, естествознани тата географи (сӑмахпа) предмечӗсем тӑрӑх туллимар вӑтам шкул программи таран, иккӗмӗшпе виççӗмӗш курсне кӗрес текенсенчен асӑннӑ предметсем çумне хушса физикӑ, хими тата ССРС историйӗ тӑрӑх ыйтаççӗ.

Кӑнтӑрлахи уйрӑма вӗренме кӗнисем валъли

рабфакӑн общежити, выртса тӑмалисем (матрац, сытар, утийал, койкӑ) тата вӗреннине кура стипенди параççӗ.

Зайавленисемпе пӗрле çакнашкал документсем кирлӗ:

1. Вӗренни çинчен свидетелствӑ.
2. Сывлӑх çинчен тата хул кастарни çинчен справкӑ.
3. Хӑш çулта çурални çинчен свидетелствӑ.
4. Автобиографи.
5. Çар учотӗнче тӑни çинчен справкӑ (военнообйазаннӑйсемшӗн).
6. Виçӗ фото-карточкӑ—вӗренекен хӑй алӑ пусса тата государствӑ учрежденийӗнче çирӗплетсе йамала.

Паспорт пӗрле илсе пымала.

Зайавленисене августӑн 15-мӗшӗччен йышӑнаççӗ. Испытанисем августӑн 20—25-мӗш кунӗсенче пулаççӗ. Испытанине рабфак чӗннипе çеç пымала.

Занъатисем çентабӗрӗн 1-мӗшӗнче пуçланаççӗ.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 62. Педрабфак. Директору.

ДИРЕКЦИ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 373

Гор. Чебоксары, Типографи № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 8917.